1941
ИЮНЬ
29
ВЫРСАРНИКУН
151 (5866) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

БКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Фашистла варварсене çĕр çинчен шăлса ывăтар!

Çĕнтерĕве кĕрешсе илмелле, çĕнтерӳ пирĕнтех пулать!

Пирĕн çĕршывра — патриотла аслă çĕкленӳ. Вăл пĕр шухăшпа, пĕр туйăмпа, пĕр ирĕкпе пурăнать. Отечественнăй вăрçă, тăван çĕршывăн, унăн чыслăхĕшĕн, унăн ирĕклĕхĕшĕн пыракан вăрçă халăх массисене тĕпренех тапратса çĕклерĕ. Хăйĕн вăрă-хурахла, ирсĕр сăн-сăпатне пĕтĕмĕшпех, уçса кăтартнă ултавлă тăшман совет халăхĕн чи таса, чи хаклă туйăмĕсене пырса тĕкĕнчĕ. Халăхăн хаяр çилли вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк. Фашистла çĕлен-калтана таптаса лапчăтас кăмăл никам çĕмĕрейми çирĕп. Хăйне хăй мухтанчăкла шанакан, инçетрине курайман Германи фашизмĕ хăйне хирĕç мĕнле вăйсене тапратса çĕкленине ăнланмасть. Ана вăл ăнланĕ, курĕ. Хăватлă государство туса çирĕплетнĕ икçĕр миллионлă халăх фашистла захватчиксене хирĕçле хаяр курайманлăхпа, вĕсене тăван çĕр çинчен хăваласа кăларас тăкăлă кăмăлпа пĕтĕçсе пĕрлешрĕ.

Фронтсенче Хĕрлĕ Çар геройла паттăрлăхпа çапăçать. Вăрçă халĕ кăна пуçланчĕ-ха, анчах та çакă уççăнах палăрчĕ: Наполеон пек пулма сĕмленекен Германири кăпшанкăшăн вĕрсе хăпартнă триумфпа йӳне ларакан çитĕнӳсен вăхăчĕ пĕтрĕ. Преступленисемшĕн, тискер кайăкла ĕçсемшĕн, çынсене тата халăхсене ирсĕррĕн пусмăрланăшăн тӳлесе татмалли сехет ытларах та ытларах çывхарса килет.

Пирĕн аслă çĕршыв çирĕп, лăпкă, вăл хăй çĕнтерессине шанса тăрать. Совет Союзĕн хашни гражданинĕ хăйĕн тăван çĕршывĕ çине вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк юратупа пăхать. Вăл хăйĕн хаярлăхĕпе, хăйĕн вăрçă вăхăтĕнчи çирĕплĕхĕпе—илемлĕ те чаплă.

Фашистсем ултавлăн килсе çапнă самантра хăраса ӳкмесĕр, пирĕн çĕршыв хăйĕн ĕçне малалла туса пырать. Вăл хăйĕн ĕçри вăй-халне икĕ хут, виçĕ хут ӳстерчĕ. Хăйĕн тăван Хĕрлĕ Çарне, хăйĕн тăван Тинĕс-Çар Флотне чи çĕнĕ, чи лайăх хĕçпăшал парас тесе, вăл ĕç тухăçлăхне хăпартса пырать. Мĕнпур производство вăрçăллă производство пулăр, çĕнтерӳ фронтра та, тылра та туптанса çирĕплентĕр тесе, рабочисем, инженерно-технически работниксем, служащисем хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Колхозниксем те уйăрсенче çавăн пекех пĕтĕм вăя хурса, пĕтĕм чĕререн хавхаланса ĕçлеççĕ. Ĕçлĕ алăсемпе пăхса ӳстернĕ пысăк тухăçлă тырпул пучах кăларать. Ун çине фашистсен куçĕсем вăрăлла сĕмленсе, ăмсанса пăхаççĕ. Гитлер Германине выçлăх патне илсе çитерчĕ. Вăл Хĕвеланăç Еврокăри çĕршывсене çаратса тустарчĕ. Халĕ ĕнтĕ, хăйĕн çулĕ çинче вилĕм, аркату, чухăнлăх, выçлăх акса, вăл совет ҫресченĕсен çăкăрĕ патне алă тăсать. Çака вăл пулас çук!

Пирĕн çĕршыв çирĕп, лăпкă, хăй çĕнтерессине шанса тăрать. Вăл капшайса мухтанассинчен аякра тăрать. Пирĕн халăх пĕлет, çĕнтерӳ хăй тĕллĕнех алла кĕмест. Çĕнтерĕве çапăçусенче, вăйлă та юлă çапăçусенче кĕрешсе илеççĕ. Çĕнтерĕве кĕрешсе илес тесен, хăюллăхпа паттăрлăх, чăтăмлăхпа тимĕр пек çирĕп ирĕк, дисциплинăпа организованность, пурнăçа пама та хатĕр тăни тата сыхăлăх кирлĕ.

Тăшман вăйлă. Унăн вăйĕсене тивĕçлипе хакламанни çăмăлттай шухăш пулнă пулĕччĕ. Вăрçă пĕтĕм вăй-халне пухма, тимĕр пек çирĕп чăтăмлă пулма, хăюллă та лăпкă пулма хушать. Пирĕн красноармеецсем, летчиксем, танкистсем, стрелоксем, краснофлотецсем кашни кунах паттăрлăхпа боевой чăтăмлăхăн образецĕсене кăтартаççĕ. Вĕсем пек пулас пулать мĕнпур совет граждăнĕсен. Харпăрхăйне çăмăл çитĕнӳсем çинчен калакан шухăшсемпе йăпатса ларма юрамасть. Уллавлă чее тата вăйлă тăшмана хирĕç пыракан вăрçă пысăк вăй-хал хума, жертвăсем тума хушать.

Пирĕн çĕршыв жертвăсен хакне пĕлет, йывăрлăхсемпе хăрушлăхсене курнă вăл. Вĕсем çинче ӳснĕ вăл, вĕсем çинче туптанса çирĕпленнĕ. Ленин — Сталин партийĕ пирĕн пĕтĕм халăха йывăрлăхсене çĕнтерсе тухма вĕрентсе воспитани парать.

Асран кайми граждăн вăрçи сулĕсенче пирĕн халăх фронтра та, тылра та паттăррăн тата чăтăмлăн кĕрешнĕ. Ана хăш чух ăнăçăр пулнă ĕçсем хăратса ӳкермен; ăна тăшманăн техники хăратайман. Халăх çĕнтерӳ хăйĕнче пулассине пĕлсе тăнă. Рабочисемпе хресченсем арăслансем пек çапăçнă, хăйсен пурнăçĕшĕн тата хăйсен ачисен пурнăçĕшĕн çапăçнă, тăван çĕршывăн, унăн чыслăхĕпе мухтавĕшĕн çапăçнă.

Пысăк йывăрлăхсенче совет халăхĕ хăйĕн çĕнĕ хуçалăхне туса йĕркеленĕ, çĕршыв оборонине туса çирĕплетсе пынă, хулари тата ялти мĕнпур ĕççыннисен ырă пурнăçĕн никĕсĕсене хунă. Йывăрлăхсем кашни утăмрах пулнă. Хăрушлăх кĕтес хыçĕнчен сыхласа тăнă. Рабочисемпе хресченсем хăйсем çине пайтах йывăрлăхсем илнĕ. Хăйсене кирлине пурнăçа кĕртес тата хăватлă индустрине — çĕршыв çар хăвачĕн, унăн хуçалăхпа культура аталанăвĕн никĕсне туса çирĕплетес тесе вĕсем хăйсен ирĕкĕпех жертвăсем тунă.

Пирĕн мухтавлă халăха йывăрлăхсемпе, хăрушлăхсемпе хăратса пăрахаймăн! Çĕнтерӳсене мĕнле тунине вăл лайăх астăвать. Çĕнтерӳсем хăйсем тĕллĕн килменнине вăл лайăх пĕлет. Вĕсене фронтра—вăрçă фронтĕнче тата ĕç фронтĕнче тăвас пулать.

Вăрçă халĕ кăна пуçланать-ха. Пулма пултарать, тен вăл часах вĕçленмĕ. Уйăм çапăçусенчи çитĕнӳсемпе çĕнтерӳсем пирĕн пуçа çавăрса ярас çук. Миллионсем хутшăннă вăрçă, асла халăх хутшăннă вăрçă вăл—историллĕ сложнăй кĕрешӳ.

Эпир пĕр çакна лайăх пĕлетпĕр: çĕнтерӳ пирĕнтех пулать. Уйăм тапхăрсем кирек мĕнле пулсан та, уйăм çапăçусен результачĕсем кирек мĕнле килсе тухсан та,—çĕнтерӳ пирĕнтех пулать!

Эпир çĕнтеретпĕрех, мĕншĕн тесен эпир отечественнăй таса вăрçăна тухрăмăр, пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç, тăшман вара преступленийĕлле, вăрă-хурахла, çаратуллă вăрçăна хăй хыçĕнчен Германи халăхне ирĕксĕрлесе сĕтĕрсе кĕрет.

Эпир çĕнтеретпĕрех, мĕншĕн тесен пирĕн çĕршыв хăватлă пĕрлĕхлĕ патриотла хавхаланупа çĕкленсе тăчĕ, пирĕн ирсĕр тăшманăн çĕршывĕ вара ывăннипе, ихĕленнипе, шанманнипе хавшаса çитнĕ, выçăхса çитнĕ, канăçшăн, лăпкă пурнăçшăн тунсăхласа çитнĕ.

Эпир çĕнтеретпĕрех, мĕншĕн тесен пирĕн хăватлă Хĕрлĕ Çар вăйлă, пĕрлĕхлĕ çар, пирĕн резервсем иксĕлми пуян, пирĕн халăхăн, пирĕн сталинла правительствăн ирĕкĕ никам çĕмĕрейми çирĕп.

Çирĕплĕх, чăтăмлăх, тимĕр пек çирĕп дисциплина, пĕтĕм вăя, пĕтĕм чĕрене парса тăвакан ĕç—çакна ыйтать пирĕн тăван çĕршыв хăйĕн кашни ывăлĕнчен, хăйĕн кашни хĕрĕнчен. Туллаштăрах тăшман; тытамак тытнă пек кăшкăртăр, суйтăр, хуçалантăр юнлă фашизмăн тăм каминчĕ; хăйĕн вилме кăларса яракан салтакĕсен ăс-тăнне спиртпа тĕтрелеттĕр,—вăл пирĕн халăхăн боевой çирĕп тимлĕхне çĕмĕрме пултарас çук.

Çĕнтерӳ пирĕнтех пулать! Шăлсене сыртса, хамăрăн ирĕк-кăмăла пухса пĕтĕçтерсе, вăрçăн мĕнпур йывăрлăхĕсене пĕтĕмĕшпех ăнланса тăрса, эпир çĕнтерӳ хатĕрлетпĕр—Германи фашизмне—пирĕн тăван çĕршывăн тата пĕтĕм этемлĕхĕн хаяр тăшманне юлашки хут, нимĕн хăварми аркатса тăкмалах çапиччен,—çав çĕнтерĕве кашни кун, кашни сехетре хатĕрлесе пыратпăр.

(«ПРАВДА» умстатьи, июнĕн 28-мĕш.).

Англи посолĕ тата Англин çар миссийĕпе экономикăллă миссийĕн членĕсем Мускава килсе çитнĕ

Июнĕн 27-мĕшĕнче Англин ССР Союзĕнчи посолĕ г. Криппс Англирен Мускава тавăрăннă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Мускава Англин çар миссийĕ çак составпа килсе çитнĕ: генерал-лейтенант Мэсон Макфарлан, контр-адмирал Майлс, вице-маршал Кольер, экономикăллă миссин пуçлăхĕ — Лоуренс Кадбюри, полковник Эксам, командор Уайбэрт, полковник Дэвис

Вокзалра миссисене çаксем кĕтсе илнĕ: Наркоминделăн генеральнăй секретарĕ А. А. Соболев, Моссовет председателĕн заместителĕ М. А. Яснов, генеральнăй штаб начальникĕн заместителĕ генерал-лейтенант Соколовский, Главнăй тинĕс штабĕн начальникĕн заместителĕ контр-адмирал Н. М. Харламов, Наркомвнешторг коллегийĕн членĕ Д. Д. Митустин, Наркоминделăн Протокольнăй отдел заведующийĕ В. Н. Барков, Наркоминделăн 2-мĕш Хĕвеланăç отдел заведующийĕ Ф. Т. Гусев т. ыттисем, çавăн пекех тата посольство советникĕ Г. Л. Паггаллейпа пĕрле Англи посольствин составĕ.

В. М. Молотов юлташ Англи посолне г. Криппса тата Англи миссийĕсен членĕсене йышăннă

Июнĕн 27-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Англин Мускава тавăрăннă посолне Г. Стаффорд Криппса йышăннă, вăл Молотов юлташа Англин çар миссийĕпе экономикăллă миссийĕн килсе çитнĕ членĕсемпе, çавăн пекех тата Англин Мускаври посольствин мĕнпур дипломатиллĕ составĕпе паллаштарнă.

Совет авиацийĕ Констанца çине пырса тапăнни çинчен тĕплĕн пĕлтерки

ЛОНДОН, июнĕн 27-мĕш. Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: совет самолечĕсем Констанца çине пырса тапăннине хăй курса тăнă çын çапла каласа панă: июнĕн 22-мĕшĕнче кăнтăрла совет самолечĕсем хула çине пит çӳлтенех мар вĕçсе пынă. Эсминецсем çинче тата çĕр çинче вырнаçтарса лартнă зенитнăй батарейăсем вăйлăн персе тăнă пулсан та, совет самолечĕсем пикировка туса бомбăсем пăрахма пуçланă. Бомбăсем пăрахнă вăхăтра пĕр эсминеца сиен кӳнĕ. Совет самолечĕсем çинчен пăрахнă пĕрремĕш бомба нефтехранилищĕсем çине ӳкнĕ. Нефтехранилищĕсем çийĕнчех çунма пуçланă та та сĕм çĕрлечченех çуннă. Атака вĕçленсе килнĕ тĕле Германи самолечĕсем вĕçсе пынă, анчах та вĕсем совет самолечĕсене пĕрне те пулин сиен кӳме пултарайман. (ТАСС).

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче Совет Союзне пулăшу парассишĕн пыракан движени

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 27-мĕш. (ТАСС). Çĕршер çынсем, питех те тĕрлĕ национальноçлă çынсем, Совет Союзĕн Нью-Йоркри консульствине хăйсем Совет Союзне пулăшу пама, доброволецсем пулса Хĕрлĕ Çар речĕсене кĕме кăмăл туни çинчен сăмахпа каласа, çырусем ярса пĕлтереççĕ. Вĕсем хушшинче тахçан ĕлĕк патша Российинчен куçса кайнă вырăссем те сахал мар. Вĕсенчен пĕри Филадельфирен çапла çырать: «Эпĕ Хĕрлĕ Çар службине кĕме тата гитлеризма çĕмĕрсе тăкас ĕçре Совет Союзне пулăшу пама хатĕрех тăратăп. Сывă пулăр ССР Союзĕ тата унăн икçĕр миллионлă халăхне хăйсем хыççăн ертсе пыракан çулпуçсем!» Пĕр австриец хăй «ССР Союзĕнче кирек мĕнле службăра та, кирек мĕнле вырăнта та ĕçлеме» хатĕр пулни çинчен пĕлтернĕ. Эпĕ,—тесе çырать вăл,—автомобиле тата мотоцикла тытса пыма пултаратăп. Эпĕ дизельнăй моторсене пĕлетĕп, эпĕ лайăх повар». Нью-Йорка пурăнакан вырăс инженерĕ çапла калана: «Мирлĕ СССР çине тапăнса, Гитлер тискер преступлени турĕ. Эпĕ

Совет информаци бюровĕнчен

Иртнĕ кун хушшинче **Шауляй, Вильно** тата **Барановичи** енĕсенче пирĕн войскăсем оборона валли хатĕрлесе хунă позицисем çине куçса пынă, позицисем патне çитмелли хушăсенче çапăçу валли чарăна-чарăна тăнă.

Çак енсенче пирĕн войскăсен боевой ĕçĕсенче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Хăшпĕр енсемпе участоксенче пирĕн чаççем контр-атакăсем тунă, противника пысăк поражени кӳнĕ.

Июнĕн 27-мĕшĕнче кăнтăрла **Луцкпа Львов** енĕсенче вăйлă та хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Çак енсенче противник, пирĕн войскăсем вырнаçса тăракан лини урлă çĕмĕрсе каçма тăрăшса, çапăçăва танклă пысăк соединенисем кĕртнĕ, анчах та пирĕн войскăсем противник çĕмĕрсе каçма хăтланнине пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă, противника пысăк çухатусем кӳнĕ. Çапăçусенче чылай çынсене тыткăна илнĕ тата нумай трофейăсем туртса илнĕ.

Минск енче противникăн танклă пысăк чаçĕсен наступленине сирсе янă.

Çак енче пирĕн войскăсем контрудар туса противникăн пысăк штабне çĕмĕрсе тăкнă, нимĕç генералне вĕлернĕ тата оперативлă документсене туртса илнĕ. Çак енчех тепĕр участокра пирĕн чаççем противник танкĕсене 40 танка çити пĕтерсе тăкнă.

Фронтăн **Бессарабири** участокĕнче **Скулени** районĕнче пирĕн чаççем противнике вăйлăн пырса çапнă, вăл çак енче пысăк наступлени пуçлама хатĕрленсе тăвакан ĕçсене арканса янă.

Ыран июнĕн 27-мĕш тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсен группи, юханшыв çинчи флотили пулăшнипе, **Дунай** юханшывĕ урлă каçнă, вырнаçса тăма лайăх пунктсене туртса илнĕ, 510 çынна тыткăна илнĕ, 11 орудие тата нумай снаряжени туртса илнĕ. Тыткăна илнисем хушшинче—2 офицер.

Фронтăн çак участокĕнче **Перемышль** патĕнчен пуçласа **Хура тинĕс** таран пирĕн войскăсем государство чиккине хăйсен аллинче çирĕп тытса тăраççĕ.

* * *

Германи захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче Хĕрлĕ Çар командирĕсем, боецĕсем, подразделенисемпе чаçсем калама çук пысăк героизм, ăсталăхпа хăюллăх кăтартаççĕ.

Н-ски стрелковăй полк вăйлă та вирлĕ атака туса нимĕçсене Н. местечкинчен хĕссе кăларнă, 22 çынна тыткăна илнĕ. Противник каялла чакнă, çапăçу хирĕнче унăн 700 çын вилсе тата аманса юлнă.

* * *

Румыни чиккинчи çапăçусенче Н-ски стрелковăй дивизин чаçĕсем нимĕççене румынсене 800 çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Пирĕн Хура тинĕс флочĕ, хамăрăн авиацине пĕрле, нимĕç карапĕсен Констанцăри базине пырса çапнă.

* * *

Лейтенант Швец командинче тăракан рота питех те паттăррăн кĕрешнĕ. Н-ски районра çак рота хăйĕнчен икĕ хут вăйлăрах противнике атакăланă, ăна каялла хăваласа янă, пысăк çухатусем кӳнĕ.

* * *

Полковник Турбин командинче тăракан зенитнăй артиллери чаçĕнче лейтенант Муравьевăн батарейи уйрăмах мала тухнă. Çак батарея тăшманăн «Юнкерс-88» йышши самолечĕсене умлă-хыçлах икĕ самолет персе антарнă, нимĕçсен 5 летчикне, вăл шутра икĕ лейтенанта тыткăна илнĕ.

* * *

Июнĕн 25-мĕшĕнче тул çутăлса килнĕ вăхăтра красноармеецсен формине тумланнă нимĕçсен батальонĕ совет территорийĕ çине тапăнса кĕме хăтланнă. Лейтенант Жиговăн командинче тăракан пирĕн рота, Н. ялне хӳтлесе тăнăскер, противнике хирĕç вăйлăн неме пуçланă. Анчах та фашистсем вырăсла: «Ан перĕр, эпир хамăрăннисем!» тесе кăшкăрма пуçланă. Боецсем вăйсăртарах пеме пуçланă, вара вĕсене хăвăртах тăшман хупăрласа илнĕ. Çакăн хыççăн кĕçĕн лейтенант Пушкаренко командинче тăракан пулеметнăй взвод, гранатăсемпе персе хăйне валли çул уçнă, унтан вара пулеметсенчен хăватлăн персе, стрелковăй подразделенисен контратакине хӳтлесе тăнă. Çапла тунипе тăшман хупăрласа илнĕ вырăнтан рота ăнăçлăн тухнă, нимĕçсене чылаях пысăк çухатусем кӳнĕ.

* * *

Финлянди президенчĕ Рюти июнĕн 26-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каласа, Гитлер элекне тепĕр хут каланă. Рюти çапла каланă: «1940 çулти ноябрь уйăхĕнче Берлинра пулнă каласусем вăхăтĕнче ССР Союзĕ хăйпе Финлянди хушшинчи татса паман ĕçсене йĕркелесе яма тата çак çĕршыва пĕтерсе тăкма Германирен алăсене ирĕклетме ыйтнă», тенĕ.

Çак намăссăр суя элекĕн тĕллевĕ — Финлянди халăхне улталасси, ăна Совет Союзне хирĕçле вăрçа хĕтĕртсе кĕртесси пулса тăрать.

Финлянди правителĕсем Финлян рен нимĕç фашисчĕсем валли ССР юзĕ çине тапăнмалли плацдарм т хунине фини халăхĕнчен пытарса т хăтланаççĕ.

* * *

Италири хаçатсем, «Российăн Бол рие хирĕç тата Балканри ытти ç шывсене хирĕç агрессиллĕ шухăш пур» текен пĕлтерӳсем сарса, тĕнче обществăллă шухăша улталамa хăт наççĕ. Чăннипе илсен, çакна пĕ тĕнче пĕлет: 1) болгар халăхĕ вырăс халăхĕ нумай вунпар çул тăршшĕнче историллĕ туслăхпа хăнса тăнă; 2) Болгарие Гит туртса кĕнĕ тата халĕ туртса кĕ кен вăрçăран хӳтлесе хăварас те ССР Союзĕ мĕн май килнĕ мерăсе пĕтĕмĕшпех йышăннă; 3) ССР Союз Балканри ытти çĕршывсем тĕлĕшпе агрессиллĕ шухăшсем нихăçан пулман тата халĕ те çук.

Çав вăхăтрах пуриншĕн те çакă па лă: Германия Балканри государствăс никама пăхăнмасăр пурăнмалли по женине тата нациллĕ ирĕклĕхне тап са тăкрĕ, фашистла Итали вара Гре не тата Югославин пысăк пайне чу лăха кĕртсе ӳкерчĕ.

* * *

Будапештра çапла пĕлтернĕ: Венгр хăй Совет Союзĕпе вăрçăллă состоя ре тăрать тесе шутлать, тенĕ. Çак шени акă мĕнрен тухса тăнă икк совет авиацийĕ Венгрири хуласем çи пырса тапăннă пулать. Çапла пĕлтер пĕтĕмĕшпех суя япала, совет авиаци Венгрири хуласем çине нимĕнле пырса тапăнман. Венгри правительст çакăн çинчен тӳрĕ кăмăлпа тата уçă калама хăрать: вăл вăрçăллă состоя çинчен Гитлер пана приказ тăрăх пĕ тернĕ, çаван пекех тата Венгри прав телĕсем, май килнĕ тĕлте, ют пурлă сăптăрса илессинчен те пăрăнса тăм пулĕччĕç.

* * *

Италири самаях паллă «Мессаджер хаçат пĕтĕмĕшпех провокацияллĕ тĕ левпе çакăн пек хыпар сарать: «в рăссем химиллĕ вăрçа хатĕрленеçç имĕш. Германипе Итали фашисчĕс яланхи меслечĕсене мĕн чухлĕ те лин пĕлекен кашни çыннăнах çак п вокаци мĕне пĕлтерни уççăн курăн тăрать. Пулма пултарать, вĕсем хăйс химиллĕ вăрçă хатĕрлеççĕ пулĕ, тĕр сине малтанах пытарса хума, пуç çинчен сывă пуç çине йăвантар хăтланаççĕ пулĕ.

Совет информаци бюровĕнчен

Июнĕн 28-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем çĕрĕпех çапăçнă, **Минск** тата **Луцк** енĕсенче уйрăмах хаяр çапăçусем пулса иртнĕ.

Минск енче пирĕн войскăсем танк соединенийĕсемпе, авиацине тата артиллерипе хăвăрт та хăватлăн пырса çапса противникăн танк чаçĕсене тата 39-мĕш танковăй корпусăн штабне çĕмĕрсе тăкнă. Çак çапăçура пирĕн чаçсем трофейăсем, оперативлă документсем туртса илнĕ тата салтаксене тыткăна илнĕ.

Луцк тата **Львов** енĕсенче противникăн танк чаçĕсене хирĕç çĕрĕпех çапăçусем пынă. Противник Львов тавра çаврăнса кайма хăтланнисене пирĕн войскăсем ăнăçлăн сирсе янă, вĕсем Львов районне хăйсен аллинче çирĕппĕн тытса тăраççĕ.

Çĕрлехи çапăçусен результачĕсене тĕплĕн палăртаççĕ.

Фронтăн **Бессарабири** участокĕнче пирĕн кавалери дивизийĕ атака туса противникăн уллăмĕш пехотнăй полкне йăлтах пĕтерсе тăкнă, çав полк **Прут** юханшывĕ урлă каçма хăтланнă пулнă.

Дунай юханшывĕн çыранĕнче çапăçусем пынă вăхăтра татах 300 çын таран тыткăна илнĕ.

Фронтăн мĕнпур участокĕнче, **Перемышльрен** пуçласа **Хура тинĕс** патне çитиченех, пирĕн войскăсем государство чиккине хăйсен аллинче çирĕп тытса тăраççĕ, противник пирĕн территори çине кĕме нумай хутчен хăтланнисене пирĕн войскăсем ăнăçлăн сирере яраççĕ.

Пирĕн авиаци июнĕн 27-мĕшĕнче **Шауляй, Вильно, Минск** тата **Луцк** енĕсенче противникăн мотомехчаçĕсене пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе кунĕпех ăнăçлă операцисем тунă. Пирĕн авиаци пырса çапнипе противник танкĕсене чылай пысăк поражени кӳнĕ.

* * *

Фронтран килекен пĕлтерӳсем пирĕн боецсемпе командирсен героизмĕпе çирĕплĕхĕн нумай йышлă çĕнĕ факчĕсем çинчен каласа параççĕ.

Боевой заданине пурнăçа кĕртнĕ хыççăн хăйĕн базинне таврăнакан совет бомбардировщикĕ çине нимĕçсен «Мессершмитт» йышши 5 истребитель тапăннă. Çапăçура бомбардировщике сиен тунă. Бомбардировщик экипажĕ çавтери чăтăмлă та çирĕп пулнă. Экипажăн йывăр амантнă командирĕ кĕçĕн лейтенант Соловьев самолета тăшман хупăрласа илнинчен илсе тухнă. Пулеметран персе тата ăстан маневрсем туса, бомбардировщик экипажĕ противник атакисене сирсе янă та, самолета пирĕн территори çине илсе килнĕ.

* * *

Бензуков красноармееца тăшман 3 кун хушши хупăрласа тăнă. Фашистсем ăна пăшалтан персе питĕ нумай амантса пĕтернĕ, анчах вăл çапах та парăнман. Юн юхтарса, Бензуков çĕнĕ огневой позицисем çине тăвăнса пынă, фашистсем çине тĕл пере-пере тивретнĕ. Вирçĕмĕш кунĕнче герой тăшман хупăрласа илнĕ çĕртен çăлăнса тухнă. Хальхи вăхăтра Бензуков юлташ г питальре выртать тата хăвăртрах ч тавăрнасси çинчен ĕмĕтленет.

* * *

Летчик-истребитель лейтенант П прятов противникăн икĕ самолетне рĕç çапăçса вĕсенчен пĕрне пе ӳкернĕ, анчах хăйĕн самолетне сиен нĕ пирки унăн ирĕксĕрех ют тер тори çине анса ларма тивнĕ. Ча ăна вилнĕ тесе шутланă. Çав вăхăт Подпрятов юлташ самолета юсанă тепĕр кунне хăйĕн аэродромĕ çине вăрăннă тата фашистсене хирĕç пы кан çапăçусене çĕнĕрен хутшăннă.

* * *

Н. ялтă ял районĕнче фашистла бо бардировщик ирĕксĕрех анса лар ăна пирĕн истребительсем персе ӳк нĕ пулнă. Фашистла летчиксем ыр хушшинче пытанса юлма хăтлан анчах çакна ялсоветĕнче дежурствă тăнă колхозница Сарафаненко юлт сиссе, бандитсене тытма хăвăрт колхозниксен ушкăнне организацил тухнă. Хăюллă патриотсем фашисто пилĕк летчикне тытса, вĕсене пи çар чаçне илсе пынă.

* * *

Хура тинĕс çыранĕнче 6 колхоз тăшманăн пĕрне антарнă гидросамол не асăрхаса илнĕ, çав гидросамо тинĕсе анса ларнă. Колхозниксем лăççен судни çине ларса гидросамо ларнă вырăна çийĕнчех çитнĕ те, шистсен пилĕк летчикне, резинăл тунă лодкăпа тарса хăтăлма хăтл нăскерсене, ярса тытнă.

ССР Союзĕнчи халăхсен фашистла агрессорсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕнче Тува халăхĕ совет халăхĕпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартса парать

КЫЗЫЛ, июнĕн 27-мĕш. (ТАСС). Кызылра Тува Халăх Республикин вуннăмĕш хуралĕ (съезчĕ) уçăлнă. Кун йĕркинче—правительство отчечĕпе доклачĕ, çĕнĕ конституци проекчĕ çинчен доклад тата правительство органĕсен суйлавĕсем. Революциллĕ халăх партийĕн Центральный Комитечĕн секретарĕ Тока Германи фашисчĕсем ССР Союзĕ çине ирĕçĕрăн тапăнни çинчен васкавра çапла калана: Тува халăхĕ фашистла агрессорсене хирĕç татăклă çĕнтерӳ тăвичченех пыракан кĕрешӳре совет халăхне пурнăçа шеллемесĕр, пĕтĕм вăйпа тата пĕтĕм средствăсемпе пулăшма хатĕр тăрать.

Пĕтĕм çĕршыв тăрăх митингсем пуласа иртнĕ. Митингсен участникĕсем ССР Союзĕнчи кĕрешĕве çĕкленнĕ халăхсемпе пĕр шухăшлă пулнине пĕр

Сталин—пирĕн пурнăç

Эпир, партипе правительство чĕнипе, хамăрăн мухтавлă та паттăр, никам çĕнтереймĕн хăватлă тăван Хĕрлĕ Çар ретне тăма пĕлвĕç илтĕмĕр.

Çак тивĕçлĕхшĕн эпир чĕререн савăнатпăр, хамăр пурнăçа шеллемесĕр, пĕр тумлам юн юлмиччен тăшмана хирĕç çапăçма тупа тăваттăр.

Пирĕн вăй пысăк. Ĕçхалăхĕ отечественнăй вăрçăна çĕкленчĕ. Совет халăхĕ

Сталин—пирĕн хĕвел!
Сталин—пирĕн ĕмĕт!

Тăван çĕршывăн, Аслă Сталинăн çапăçăва тухса, усал тăшмана пĕтеротпĕр!

Сывă пултăр тăван çĕршыв!

Сывă пултăр большевиксен партийĕ тата унăн çулпуçĕ юратнă Сталин!

М. ЯКИМОВ.

Военнослужащисен çемьисен пособисем парас ĕç

РСФСР Социальнăй Обеспечени лăх Комиссариачĕ хăйĕн вырăнсе мĕнпур органĕсене СССР Верховный вечĕн Президиумĕ 1941 çулти ию 26-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх ра вой тата кĕçĕн начальство составĕ

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Флот тата Совет Авиацийĕн хăюллă соколĕсем Тăван Çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртĕç, агрессора тĕппипех çапса çĕмĕрĕç!

Хĕрарăмсен производствăри активлăхĕ

Директор кабинетне 58 çула çитнĕ Сахаров пырса кĕчĕ. Нумаях та пулмасть отпуска кайнă вăл.

— Отпускпа усă курмастăп, паянах кам ĕç вырăнне тăратăп. Ĕçлеме ирĕк пар мана, директор юлташ. Цех начальникĕсенчен кам та пулин алла винтовка тытса хăватлă Хĕрлĕ Çар ретне тăрсан, эпĕ ун ĕçне туса пыма та хатĕр,—терĕ Сахаров юлташ.

Утмăл виçĕ çула çитнĕ Трифонов юлташ кочегар пулса ĕçлет. Хĕрлĕ Çара илме ыйтса заявлени панă вăл.

Халăх тарăхăвне сăмахпа каласа пама та çук. Арçынни те, хĕрарăмĕ те, ватти те, çамрăкки те урса кайнă тăшмана таптаса лапчăтма хатĕр тăраççĕ. Производствăра хĕрарăмсем ĕçлеççĕ.

— Ĕç дисциплини çирĕпленчĕ. Работницăсен организацийĕнчĕ пысăк, вĕсем хуть те мĕнле заданине те пурнăçа кĕртме хатĕр, — тет цех начальникĕ Герасимов юлташ. Беляшова юлташ бригади мобилизаци пуçланнă маллтанхи кунах плана 130 процент тултарнă. Ĕç тухăçлăхĕ ӳссех пырать.

Хĕрарăмсем производствăра лайăх вĕренипе пĕрлех арçынсен ĕç вырăнне йышăнма хатĕр тăраççĕ. Механически цехри слесарь Кузнецов юлташ Хĕрлĕ Çара тухса кайрĕ.

Ун вырăнне Сергеева юлташ йышăнă. Горбунова юлташ та слесаре вĕреннĕ. Бухгалтеринче ĕçлекен Никитина Тернин юлташсен вырăнне те хĕрарăмсем йышăннă.

Çакăн пек ĕçлет Шупашкарти ликерка эрех заводчĕн коллективĕ. Ĕç тухăçăхне пысăккăн ӳстерсе, тăван Хĕрлĕ Çара пулăшса пырса, урса кайнă тăшмана хăвăртрах çапса аркатас ĕмĕтпе çурăнать кунта ĕçлекен кашни çын.

Т. ЕМЕЛЬЯНОВ.

Боевой хĕрарăмсем

Кĕске, анчах пысăк содержаниллĕ заявлени: «Ĕç халăхне хӳтлемешкĕн тăна Хĕрлĕ Çар речĕсене илме ыйтăп. Манăн ывăлăм Хĕрлĕ Çар речĕнче, эпĕ те тăшмана пĕтерсе тăкма ăнăçа пĕрле каятăп. Килхуçи хĕрарăмĕ М. Медведева». Акă тата тепĕр заявлени: «Елена Михайловна Лаухинăран. Адрес: Сущевски урам, пр. 9, кв. 72, телефон К. 4—02—62. Вăрçăллă положени туса хунине кура, мана хамăн вырăкпе санитари дружинине илме ыйтăп. Аттепе аппана мобилизацилеçĕç, эпĕ те айккинче тăрса юласшăн кăр».

Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çуруйăх обществин районсенчи комитечĕсенче çак кунсенчи пек нумай халăх нихăçан та пулман-ха. Кунта работницăсем, служащисем, студенткăсем, килуçи хĕрарăмĕсем килеççĕ. Вĕсем пурне пĕр кăмăлпа çунаççĕ: фронта, полевой госпитальсене каяс.

Çак кунсем хушшинче столицăри коминтерновски районра медсестрасен курсĕсене вĕренме илме ыйтса 30 заявление ятăн панă. Нумаях та пулмасть-ха запасри медсестрасен курсулла курсĕсен выпускĕ пулнă.

Архитектура институтĕнчи 150 студентка хăйсем валли медсестрасен курсĕсене организацилеме ыйтаççĕ, пĕтĕмпле машиностроени наркоматĕнче çалекен служащи-хĕрарăмсем 57 çын. Çулех военно-полевой хирургри ĕçне вĕренме тытăнаççĕ.

Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çуруйăх обществи миллионшар совет патриоткине пĕрлештерсе тăрать. Вĕсем—патăр совет воинĕсен фронтри чăн-чăн тусĕсем.

Июнĕн 25-мĕш. (ТАСС).

Пысăк тимлĕхпе ĕçлесе ответлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Хутарти Ленин ячĕпе тăкан колхоз пахча-çимĕç тăвассипе районри лайăх колхозсенчен пĕри пулма тăрать. Пахча-çимĕç туса илессипе çăмăл бригада тунă, ку бригадăна тăттăмĕш çул ĕнтĕ Н. Немаков юлташ ертсе пырать. Иртнĕ çулта колхоз пахча-çимĕçсенчен 50 пин тенкĕ тупăш тунă.

Колхоз кăçал 18 гектар çине тĕрлĕ пахча-çимĕçсем лартса хăварчĕ, вăл шутран хăяр — 3 гектар, кишĕр — 2, помидор — 1, помидор—2,5 тата купăста 5 гектар. Иртнĕ çултан пуçласа арăз тума тытăннă. Кăçалхи çулта пĕр гектар çине арбуз лартнă.

Çак пахча-çимĕç лартнă вырăна 400 ăв ытла тислĕк хурса хăварнă. Пахча-çимĕçсем лайăх ӳсеççĕ. Пахча-çимĕç ухас ĕçре В. Блинова, Е. Немакова, М. Тихонова, Е. Великова колхозницăсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

— Пирĕн промышленноçа, Хĕрлĕ Çара Флота тăрантарма çителĕклĕ апатăмĕссем кирлĕ, çавна лайăх ăнланса, манăн бригада тухăçлă пахча-çимĕç ăвассишĕн хĕрешет.

Пирĕн тыл çирĕп. Эпир хамăран Совет правительстви, Сталин юлташ йĕркеллĕ-тавра пĕтĕссе, фашистла Германипе çăрçма хамăран юратнă Хĕрлĕ Çара улăшма хатĕр, — тет пахча-çимĕç бригадин бригадирĕ Н. Немаков юлташ.

С. БАТЬКОВ.

Фронта каякансене колхозниксем хаваслăн ăсатаççĕ

ЕЛЧĔК. **(Телефон тăрăх).** Гитлерăн урса кайнă йыттисем социализмлă тăван çĕршыв çине вăрçăпа тапăнни Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсене питĕ хытă тарăхтарчĕ. Колхозниксем мобилизаци йĕркипе тата хăйсен ирĕкĕпе фашистсене çапса çĕмĕрме фронта каякансене питĕ хаваслăн ăсатаççĕ. Колхозницăсем фронта каякан арçынсем вырăнне йышăнаççĕ. Звеновод пулса ĕçленĕ хĕрарăмсем бригадирсем пулса ĕçлеме тытăнаççĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхозăн хăçал уйхиртен 1532 гектар çинчи тырпула пуçтарса кĕртмелле.

— Пирĕн колхозра ĕçлеме пултаракан хĕрарăмсем 522 çын, 1532 гектар çинчи тырпула хамăр вăйпах чи кĕске срокра, нимĕн тăккаламасăр пуçтарса кĕртме, государствăна срокченех тырпул парса татма пултарăпăр,—теççĕ колхозницăсем.

Çул тунă çĕрте те, çум çумланă çĕрте те, çĕртме сухи тунă çĕрте те колхозницăсем пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ.

— Арçынсем фронта кайнăран алăрсене усмастпăр,—теççĕ Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхозницăсем.

Колхоз тырпула уйхиртен пуçтарса кĕртме хатĕрленсе çитнĕ. 5 жнейка, 5 молотилка тата 120 урапа юсаса лартнă, 900 михĕ хатĕрлесе хунă.

Тырпула уйхиртен пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра колхозра 300 ача валли яслĕ, 700 çын валли столовăй ĕçлемелле.

Государствăна тырпул срокчен парса татас шутпа 80 лав тата унта ĕçлеме çынсем уйăрнă.

Ф. МАЙКОВ.

Çамрăк патриотсем

Ĕçе тухма килĕшсе, каçхинех калаçса татăлнă вĕсем. Ирхине çичĕ сехетре пурте пĕр çĕре, завод килхартине пухăнма пулнă. Лев, Женя, Аполлон Хлебниковсем, Шура Логинов, Слава Дерюгин, Робертпа Еник Люминарскисем тата ыттисем те — 15 ача кăтартнă вăхăтра вырăна çитеççĕ. Завод директорĕн заместителĕ Дерюгин юлташ вĕсене çăмăл ĕçсем тупса парать. Ывăнма пĕлми ĕçлеççĕ. Пуш ещĕксене пĕр çĕре пухса, йĕркеллĕн купаласа лартаççĕ. Çӳп-çапсене шăлса тасатаççĕ...

Слава Кокарев та хăй юлташĕсемпе пĕрле ĕçе тухма килĕшнĕ пулнă. Анчах та вăл çывăрса юлнă. Ашшĕсем ăна ыйхăран вăратма манса кайнă. Хăвăрт сиксе тăрать те ыйăх тĕлĕшпе, Канаш—Шупашкар çулĕпе каяс вырăнне, Етĕрне çулĕ тăрăх чупать. Хăйĕн юлташĕсене тупаймасть. Ĕçе хутшăнаймасăр юлнăшăн хытă пăшăрханнă.

Çак çамрăксем туллимар вăтам шкулта вĕренеççĕ. Каникула усăллă ирттерме, çак ответлă вăхăтра хăйсен ашшĕ-амăшĕсене, пиччĕшĕсемпе аппăшĕсене пулăшма килĕшнĕ вĕсем.

Июнĕн 25-мĕшне çакăн пек ирттернĕ ачасем. Усăллă ĕç тунă.

— Ачасем хастарлă ĕçлерĕç. Молодец вĕсем,—тет Слава ашшĕ Дерюгин.

Тепĕр ирхине çак ачасем завод директорĕ патне каллех пыраççĕ.

— Паян баржăпа кĕленчесем илсе килмелле. Пире ăна пушатма ярăр, — —ыйтнă вĕсем директортан.

Т. МАЙОРОВ.

В. Иванов ӳкерчĕкĕ («Искусство» издательстви кăларнă плакатран тунă репродукци). ТАСС фотохроники.

Колхозниксен шухăш-кăмăлĕ

ОРИНИНО (Сĕнтĕр р.), июнĕн 26-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Фашистла Германия пирĕн юратнă тăван çĕршыв çине бандитла тапăннине хирĕç колхозниксем хăйсен маттур ывăлĕсене мухтавлă Хĕрлĕ Çара ăсатнипе, колхоза оборона крепоçĕ тунипе, колхоз производствинчи ĕç тухăçлăхне ӳстернипе, пур ĕçе те вăхăтра, хастарлăн туса пынипе ответлеççĕ.

Ĕнер бригадир Анисим Григорьев çара тухса кайрĕ. Унăн бригади пур ĕçре те лайăх ĕçлесе пырать. Çара тухса кайиччен Григорьев юлташ хăйĕн бригадине панă çулйĕр ĕçĕсен планне çĕр процентчĕпех тултарчĕ.

«Восток» колхозри Богданов колхозник ертсе пыракан бригада та çулйĕр ĕçĕсемпе, уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе те малта пырать. Халĕ пур бригадăсенче те хĕрсех уборкăна хатĕрленеççĕ, уя тислĕк калараççĕ, калчасем çинче çум çумлаççĕ.

Çавăнпа пĕрлех колхозниксем хăйсен парăмĕсене, государство умĕнчи обязательствисене срокчен тултарассишĕн тăрăшаççĕ. Ялсовета кĕрекен 6 колхозра та çăмарта парса татнă. Аш-какай обязательствине ялсовечĕпе 70 процент ытла тултарнă.

Нумай колхозниксем заем укçисене парса татаççĕ. «Красная Чувашия» колхоз членĕсем заем укçине пĕтĕмпех парса татрĕç. Ялсовечĕпе илсен, çак юлашки икĕ кун хушшинче заем укçине пĕтĕмпе икĕ пин çурă тенкĕ ытла пухнă.

Çак кунсенче пур колхозсенче те, пур бригадăсенче те митингсем пулса иртрĕç. Митингра колхозниксем фашистла йытăсене хытă ылханса хĕрӳллĕ сăмахсем каларĕç, тăван çĕршыв тĕрекне ӳстерес тĕлĕшпе пĕтĕм вăйхалтан ĕçлеме сăмах пачĕç. «Красное Сормово» колхоз членĕ Волкова юлташ пухура сăмах каларĕ. Унтах вăл заем укçине парса татрĕ. Ку колхозри бригадир Ефим Семенов уборкăна лайăх хатĕрлонме, пур обязательствăсене те пĕтĕмпех тата вăхăтра тултарса пымачĕнчĕ. Вăл унпа хăйĕн шухăшне çеç мар, пур колхозниксен шухăш-кăмăлне каласа пачĕ.

Парторг И. НИКОЛАЕВ.

Производствăра дисциплинăллă пулса Хĕрлĕ Çара пулăшатпăр

ВĂРМАР. Спортинвентарь фабрикинчи рабочисемпе служащисем СССР Совнаркомĕн Председатель Заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ радио тăрăх сăмах тухса калании пысăк тимлĕхпе итлерĕç. Фабрикăри рабочисемпе служащисен митингĕнче йышăннă резолюцире çапла каланă:

— Социализмлă тăван çĕршыв çине тискеррĕн тапăннă тăшман пирĕн телейлĕ те савăнăçлă пурнăçа пĕтерме шутлать. Анчах та, вăл хăйĕн усал ĕмĕтне ниепле те пурнăçа кĕртме пултараймасть. Ленин—Сталин партийĕ пăхса çитĕнтернĕ Хĕрлĕ Çар хăйĕн хăватлă хĕçпăшалĕпе тăшмана хамăр çĕршыв территоринчен хăваласа кăларма кăна мар, ăна пĕтĕмпех çапса аркатма пултарать.

Эпир хамăрăн фабрикăра стахановла ĕçлесе, дисциплинăллă тата сыхăлăхлă пулса, Хĕрлĕ Çара куллен пулăшса пыратпăр.

Сывă пултăр большевиксен партийĕ! Сывă пултăр пирĕн çулпуç аслă Сталин юлташ!

Тăшмана пăр шеллемесĕр çĕмĕрер!

ГОРЬКИЙ, июнĕн 24-мĕш. (ТАСС). Облаçри колхозниксем ирсĕр тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйсемпе, мĕнпур средствăсемпе пулăшма хатĕр тăраççĕ.

— Манăн çичĕ ывăлăм Хĕрлĕ Çара каяççĕ,—тенĕ Молотов ячĕпе тăракан колхозри 65 çула çитнĕ колхозница Родионова юлташ митингра.—Хамăн мĕнпур ачасене çакăн пек наказ паратăп: асса кайнă тăшмана пĕр шеллемесĕр çĕмĕрĕр. Эпир хамăр патăрта, колхозра, татах та лайăхрах ĕçлĕпĕр. Колхозри кирек мĕнле ĕçре те пирĕн хĕрарăм арçын вырăнне тăрса ĕçлĕ.

Митингсенче йышăннă мĕнпур резолюцисенче тăшмана çĕнтерессине çирĕппĕн шанса тăни янăраса илтĕнет.

Халăх хăйĕн вăйне шанса тăрать

ПЕТРОЗАВОДСК, июнĕн 24-мĕш. (ТАСС). Петрозаводскри ĕççыннисем тăшмана пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкичченех çĕмĕрес кăмăлпа хавхаланса çĕкленнĕ. Обстановка ыйтнă тăрăх çирĕп дисциплинăллă пулни халăх хăйĕн вăйне шанса тăни çинчен калать.

Заводсемпе фабрикăсенче, вăрман пункчĕсемпе чугунсул транспортĕнче юлашки кунсенче ĕçсем халичченхинчен те тимлĕрех тата организованнăрах пулса пыраççĕ. Предприятисем плансене нумай ирттерсе тултарма пуçланă. Сăмахран, июнĕн 22-мĕшĕнче Лососинский лесопункт программăпа палăртса хунинчен чылай нумайрах йывăç турттарса кăларнă. Водитель Арнэ Ниэми юлташ нормăна 125 процент тултарнă, Тауно Кярно—128 процент, Артур Такала юлташ — 131 процент. Энсори целлюлозăпа хут комбиначĕ иккĕмĕш квартал планне тултарнă. Петрозаводскри аш-какай комбинатĕнчи тата ытти предприятисенчи работниксем лайăх ĕçлеççĕ.

Хĕрарăмсенчен трактористкăсем хатĕрлеççĕ

Шăмăршă машинно-тракторнăй станцийĕ трактористсен курсне организациленĕ. Çав курсра хĕрарăмсем 30 çын вĕренме тытăнаççĕ.

МТ Станцинче халĕ хĕрарăм трактористкăсем пысăк хăвăртлăхпа пахă примерсем кăтартса ĕçлеççĕ. Хĕрарăмсем уборка вăхăтĕнче кирлĕ пулакан машинăсене юсас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ.

Государствăна тырă параççĕ

ШАХАСАН. Фашистла банда пирĕн тăван çĕршыв çине тискеррĕн тапăннине хирĕç колхозниксем государства умĕнчи парăмсене срокчен тултарнипе ответлеççĕ. Колхозсенче производствăллă активлăх ӳссе çĕкленсе пырать. Калинин ячĕпе тăракан колхоз уборкăра кирлĕ ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне 8 рыдван, 12 бестарок тунă. Кăçалхи поставка шучĕпе государствăна 150 центнер тырă тăратнă.

Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз государствăна 120 центнер, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 90 центнер тырă тăратнă. Кун пек колхозсене нумай илсе кăтартма пулать. Заемшăн укçа пухасси вăйланчĕ. Доронин ячĕпе тăракан колхоз çак кунсенче кăна заемшăн 1000 тенкĕ хывнă.

С. СОКОЛОВ.

Колхозсем 1941 çулшăн сӳс-кантăр параççĕ

Германин урса кайнă фашисчĕсем, тискер шакалсем пирĕн мирлĕ хуласемпе ялсем çине тапăнчĕç. Совет халăхне çакă хытă тарăхтарать. Пĕтĕм Совет халăхĕ Германи фашисчĕсене хирĕç çĕкленчĕ. Вĕсен пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт—фашистла варварсене нимĕн юлмиччен, тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкасси. Çак шухăшпа пурăнать, ĕçлет халĕ советăн кашни гражданинĕ.

В. М. Молотов юлташ сăмахне радио тăрăх итленĕ хыççăн республикăри нумай колхозсенче митингсем пулса иртрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем тăван çĕршыва, мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне пулăшма, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарма пуласçĕ. Юлашки кунсенче республикăри нумай колхозсем 1941 çулшăн государствăна сӳс-кантăр парса татассишĕн кĕрешеççĕ. Канаш, Шăхасан районĕсенчи колхозсем те государствăна массăллăн сӳс-кантăр параççĕ.

Государствăна панă кашни центнер сӳс-кантăр хамăр çĕршыва, Хĕрлĕ Çара пулăшни пулать.

Н. МАЛЬЦЕВ.

Колхозсем уборкăна отлично хатĕрленеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Фашистла Германия Совет Союзĕ çине вăрçăпа тапăннине ответлесе, Чемей ялсоветне кĕрекен колхозсем хăйсен ĕçĕсене темиçе хут вăйлатрĕç. Парти кандидачĕсен Чемейри группинчи коммунистсене уйрăм участоксем çумне çирĕплетсе тухнă. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене производствăра тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеме, уйри тырпулсене пуçтарса кĕме кăтартуллăн хатĕрленме, çавна май хамăрăн çĕршыва, Хĕрлĕ Çара пулăшма кирли çинчен ăнлантарса параççĕ.

«Сеятель» тата «Сатурн» колхозсем уборкăна лайăх хатĕрленеççĕ. «Страж революции» колхозри коммунист-ордоносец Данилов юлташ ертсе пыракан звено уйрăмах лайăх ĕçлет. Звенора политикăллă-массăллă ĕçе те аван йĕркеленĕ.

Н. МИХЕЕВ.

Обязательствăсене срокчен тултараççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ. Казыл-Чишмари «Маяк» колхозра митинг пулса иртрĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Германи фашисчĕсене тарăхса ылханаççĕ. «Эпир, —тенĕ пĕр кăмăллă пулса йышăннă резолюцире, — колхозниксемпе колхозницăсем, Германи фашисчĕсене вăрçăпа тухнине хирĕç ответлесе, хамăр правительство, парти тавра, Сталин юлташ тавра татах та тачăрах пĕтĕссе тăратăпăр. Эпир хамăр умри задачăсене, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарма, уборкăна кăтартуллăн хатĕрленме пулатпăр».

Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен сăмахĕсене пурнăçа кĕртме тытăнчĕç. Колхоз тата колхозник килĕсем государствăна аш-какай, сĕт-сӳ, çăм парса татрĕç. Çĕнĕ заема [illegible] ра 27.450 тенкĕлĕх сарнă пулнă укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

В. КУЗЬМ[illegible]

Ылханлă фашизма — ылханлă вилĕм!

Шурă тинĕс патĕнчен пуçласа Хура тинĕс патне çити тăсăлса выртакан фронтра вăйлă çапăçу пырать. Тăшман пирĕн çине вĕçĕмренех атакăсем тăвать. Совет халăхĕн аслă отечественнăй вăрçи пуçланчĕ.

Урнă йытă пек иртĕхсе, пуçсăрланса кайнă юншăн çунакан фашистсем Европа территорийĕнче çамрăксен, ачапăчасен, хĕрарăмсен, стариксемпе карчăксен, миллионшар ĕççыннисен юнне юхтараççĕ. Гитлер тата унăн банди Европăри халăхсен пурлăхĕсене, вĕсен кил-çурчĕсене, этемлĕх историйĕ ĕмĕрĕмĕр хушши пухса пынă пуянлăха сараттса, çĕмĕрсе çӳрерĕ. Вăл унпа тăранмарĕ. Гитлер тата унăн банди хăйсен юнпа вараланса пĕтнĕ хĕçне, вăрă-хурахла аллисене икçĕр миллионлă аслă совет халăхĕ çине çĕклеме хăйрĕ. Пирĕн çине систермесĕр тапăнса, совет халăхне çĕлен пек вăрттăн сăхса илме шут тытрĕç пулас. Анчах вăл нихăçан та пулас çук!

Пирĕн совет халăхĕ кирек мĕнле ăнсăртлăха та кĕтсе илме яланах хатĕр тăнă. Пирĕн халăх хăйĕн историйĕнче хаяр тата вăйлă тăшманпа пĕр хутчен кăна мар тĕл пулнă. Кирек мĕнле çапăçура та эпир çĕнтернĕ. Кам пирĕн çине хĕç çĕклет, çавă хăйĕн хĕçĕнченех вилет, — тенĕ халăх мĕн аваллтанах. Пирĕн халăх тăшман тапăнăвĕсене хирĕç пĕрмаях отечественнăй вăрçă туса ответленĕ, тăван çĕршыв территорийĕнчен тăшмана сирпĕте-сирпĕте кăларса çапнă, ăна ним юлмиччен çĕмĕре-çĕмĕре аркатса тăкнă. Гитлерпа та çавăн пекех пулать.

Мирлĕ пурăнакан, миршĕн кĕрешекен нумай миллионлă халăх çине, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен пĕртен-пĕр тăван çĕршывĕ çине çакăн пек ирсĕррĕн тапăннишĕн Гитлера тата унăн бандине пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем ылханаççĕ. Çак ирсĕртен те ирсĕр преступленишĕн, этемлĕх историйĕнче нихăçан пулман ултавшăн фашизм прогрессивлă этемлĕх умĕнче ответ тытать. Фашистла бандитсене çăварлăхлама вăхăт çитрĕ. Ылханлă фашизма — ылханлă вилĕм!

Хĕрлĕ Çарпа пирĕн пĕтĕм совет халăхĕ тăван çĕршывшăн, чыслăхшăн, ирĕклĕхшĕн çĕнтерӳллĕ отечественнăй вăрçа кĕчĕç. Пирвайхи тăватă кун хушшинче Хĕрлĕ Çарăн паттăр та миксĕр тата хăюллă боецĕсем, командирĕсем, политработникĕсем урса кайнă тăшман тапăнăвне сирпĕте-сирпĕте яраççĕ. Германи çарĕсене хамăрăн тăван çĕршывăн кăваласа кăлараççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн паттăр çапăçăвĕ, унăн çĕнтерĕвĕсем пĕтĕм Совет халăхне хавхалантараççĕ. Эпир тăван çĕршывăн геройла воинĕсен чаплă çĕнтерĕвĕсемпе савăнатпăр, вĕсене чи хĕрӳллĕ юратупа пĕтĕм чĕререн саламлатпăр. Совет халăхĕ большевиксен партийĕ тавра, Совет правительстви тавра, ĕççыннисен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ тавра татах та тачăрах, татах та çирĕппĕнрех пĕтĕçет.

Темиçе пиншер рабочисемпе колхозниксем тата служащисем Совет правительствинчен хăйсене Хĕрлĕ Çар ретне — фронта яма ыйтаççĕ. Орининори «Красное Сормово» колхоз членĕсен митингĕнче (Сĕнтĕр р.) колхоз председателĕ А. Моисеев юлташ çапла каланă:

«Фашистла мерзавецсем халиччен историре пулман ирсĕр ĕç турĕç, вĕсем вăрçă пуçлани çинчен пĕлтермесĕрех Совет Союзĕ çине вăрçăпа килсе тухрĕç. Молотов юлташ, правительство тата пирĕн çулпуç Сталин юлташ хушнипе, совет халăхне тăван çĕршывшăн кĕрешме чĕнчĕ.

Эпĕ хамăн ирĕкпе Хĕрлĕ Çар ретне кайма ыйтса заявлени патăм, райвоенкоматран мана хальтерех çар чăсне ăсатма ыйтатăп».

Çавăн пек кăмăл-шухăшпа пурăнать кашни совет çынни. А. Моисеев юлташ хыççăн хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар ретне кайма ыйтса Ястребов, Смирнов, Трофимов, Иванов т. ыт. колхозниксем заявлени панă.

«Эпир, — теççĕ Водопьянов ячĕпе тăракан тир-сăран комбинатĕнчи рабочисемпе работницăсем тата инженерно-технически работниксем,—Ленин—Сталин партийĕ тавра пĕтĕссе, фашистла Германин ирсĕр провокацине хирĕç хамăр производствăра ĕç тухăçлăхне татах та ытларах ӳстернипе ответлетпĕр. Кирлĕ пулсан, пурте пĕр çын пек пулса, хамăрăн аслă тăван çĕршывăн чиккисене сыхлама каятпăр».

Çĕмĕрле комбинатĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерно-технически работниксем çапла каласçĕ:

«Пурсăмăр та хамăрăн ĕç вырăнĕсенче татах та хастарлăрах ĕçлесе мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшма пулатпăр. Кирлĕ пулсан, пурте пĕр çын пек пулса, хамăр ĕç вырăнĕсене хĕçпăшалсемпе улăштарса социализмлă тăван çĕршыва сыхлама тухатпăр. Питех те тĕрĕс каларĕ Молотов юлташ:

— Çĕнтерӳ пирĕнте пулать.

Сĕнтĕр районĕнчи «Новый путь» колхоз членĕсем тăван çĕршыв оборонине тĕреклетме çĕнĕ заем укçине пĕр кун хушшинче 11 пин тенкĕ пухса панă. Телеграфистка Попова юлташ, райпотребсоюзра ĕçлекен Петровский юлташ хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çара яма ыйтса заявлени панă. Халăхăн патриотизмлă туйăмĕ чи çӳлĕ виçепе çĕкленчĕ.

Тăшман вăйлă. Вăл хăйĕн пĕтĕм вăйне пирĕн çине пăрахрĕ. Тăшмана çĕнтерме, ăна ним юлмиччен çĕмĕрсе тăкма вăй-хăват нумай кирлĕ. Çакă вăл пире нихăçанхинчен те дисциплинăллă, организацийлĕ пулма хушать. Хальхи вăхăтра пĕтĕм çĕршыври кашни гражданинăн хăйĕн вырăнĕнче пулмалла, унăн тăван çĕршыва хӳтлессишĕн ырми-канми ĕçлес пулать.

Вăрçă вăхăтĕнче фронтпа тыл хушшинче уйрăмлăх çук, тылпа фронт пĕр тан, вĕсем иккĕмĕ пĕр-пĕринпе уйрăлми çыхăнса тăраççĕ. Тăшман пирĕн çĕршыва шпионсем, диверсантсем яма, халăх тăшманĕсем урлă диверсисем, сăтăрла ĕçсем тума пултарать. Пур çĕрте те, пур ĕçре те большевикла сыхлăх пултăр. Социализмлă государствăн хăрушсăрлăхне çемçетме пăхакансене каçару çук, вилĕм вĕсене!

Кашни рабочипе работницăн вырăнĕ станок патĕнче, кашни колхозникпа колхозницăн вырăнĕ—колхозлă уйхиртте, кашни служащин хăйĕн вырăнче пулмалла. Вĕсем тӳрĕ кăмăлпа, ырми-канми ĕçлесе, Хĕрлĕ Çара мĕн кирлĕ, çавна ытлăн-çитлĕн парса тăма, пур çĕрте те халăх пурлăхне, куç шăрçине сыхланă пек, сыхласа тăма тивĕç.

Юратнă аслă Сталинăн ятне чĕрере тытса, Хĕрлĕ Çаршăн, унăн вăй-хăватне темиçе вунă хут ӳстерессишĕн пирĕн пĕтĕм вăй-халпа ĕçлемелле, тăшмана ним юлмиччен çĕмĕрсе тăкассишĕн мĕнпур арçынсемпе хĕрарăмсен, ватисен те, çамрăкисен те хăйсен пурнăçне шеллемесĕр паттăрăн кĕрешмелле.

Пире Ленин—Сталин партийĕ, аслă çулпуç Сталин юлташ ертсе пырать. Сталин юлташ ертсе пынипе эпир яланах çĕнтернĕ, çĕнтеретпĕр. Çак историллĕ çапăçура та, совет халăхĕн отечественнăй вăрçинче те эпир çĕнтеретпĕр! Ылханлă тăшман хăйĕн ылханлă вилĕмне хăй патĕнчех, хăйĕн килĕнчех тупать.

ХĔРАРĂМСЕМ-КОЛХОЗНИЦĂСЕМ! Тракторпа ĕçлеме вĕренĕр, фронта кайнă трактористсем выраннине тăрса ĕçлĕр!

☆ ★ ☆

Хĕрарăмсем, тăван çĕршыва сыхлама!

Фашистла Германи, пĕр-пĕрин çине тапăнас марри çинчен тунă договора ултавлăн пăсса, Совет çĕршывĕ çине сасартăк килсе тапăнчĕ. Вăрçă пуçланни çинчен пĕлтермесĕрех, фашистла захватчиксем пирĕн çĕр çине килсе хĕчĕç.

Совет халăхне вĕсем кĕтмен çĕртен килсе çапаймарĕç.

Ирĕклĕхе юратакан тата пирĕн хăюллă халăхăн ирĕк кăмăлне захватчиксем пĕтерсе лартнă тĕслĕх пирĕн тăван çĕршывăн историйĕнче пĕрре те пулман-ха.

Фашистла çĕлен-калтасене таптаса лапчăтатпăрах, кун пирки нимĕн иккĕленмелли те çук, мĕншĕн тесен тăшмансене хирĕç пынă çапăçусенче пире коммунистла парти ертсе пырать, мĕншĕн тесен пире пирĕн вăхăтри чи гениллĕ çын — Сталин юлташ ертсе пырать.

Совет халăхĕ çапăçăва пĕтĕмпех хатĕрленсе, хăйĕн мĕнпур хăватлă кĕлеткипе çĕкленсе тăчĕ, вăл патриотизмăн хĕрӳллĕ çулă пе хавхаланать, унăн хăюллă ывăлĕсем фронта каяççĕ, тыла юлнисем хăйсен вăйне вунă хут ытларах кăларса тыла, ĕç дисциплинине çирĕплетеççĕ, тăшмана пĕтерсе тăкас ĕçре тăван çĕршыва пулăшаççĕ.

Доброволец йĕркипе хăйсене фронта яма пуйтса заявлени панă. Пирĕн хăюллă хĕрарăмсем тăван çĕршыв ячĕпе, тăшмансене хирĕç пыракан кĕрешӳре поражени мĕнне пĕлмен парти ячĕпе, аслă та ăслă Сталин ятне чĕрере тытса çакăн пек пысăк та хăюллă ĕçе каяççĕ. Медицина сестри Н. Я. Елисеева çапла çырать: «Манăн тăван танковăй чаçре, эпĕ те хамăн тăванпа пĕрле юратнă тăван çĕршыва сыхласшăн». Клавдия Силигина хăйĕн заявленийĕнче çапла çырать: «Эпĕ оборона ĕçĕнче активистка шутланатăп тата ПВХО инструкторĕ пулса ĕçлетĕп, ПВХО, ГСО значокĕн II-мĕш сыпăк нормисене, Ворошиловский стрелок тата ГТО значокĕн I-мĕш сыпăк нормисене патăм, боецсене санитари енĕпе пулăшу пама пултаратăп. Тăшман çине тапăннă чухне те, защитăра та хăюллă пулатăп».

«Мана нимĕнле йывăрлăхсем те хăратмаççĕ», тесе çырать запаспи пилот Яшмолкина юлташ. Вăл хăйне Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн санитарнăй авиацине яма пуйтать.

Совет правительстви тата унăн пуçлăхĕ Сталин юлташ пĕтĕм халăха нихăçанхинчен те пĕтĕçӳллĕ тата пĕрлĕхлĕ пулма чĕнчĕç. «Совет Союзĕн правительстви сăхна çирĕппĕн шанса тăрать: пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăх, мĕнпур рабочисем, хресченсем тата интеллигенци, арçынсемпе хĕрарăмсем хăйсен обязанноçĕсене, хăйсен ĕçне тивĕçлĕ ăнланулăхпа туса пырĕç» (В. М. Молотов). Тăван çĕршыва хĕрӳллĕн юратни, фашистла вăрă-хурахсене çилленсе тарăхни пĕтĕм совет халăхне пĕр шухăшлă туса ура çине тăратрĕ. Хĕрарăмсем фронта кайнă арçынсем вырăнне тăрса ĕçлеççĕ. Трактористсем фронта каяççĕ, вĕсен вырăнне хĕрарăмсем тăраççĕ. Тăвай МТС тракторисчĕн арăмĕ Шусева тата Вăрнар МТС тракторисчĕн арăмĕ Васильева хăйсен упăшкисен тракторĕсем çине ларчĕç. Малтан тракторсем çинче ĕçленĕ хĕрарăмсенчен пит нумай заявленисем килеççĕ. Октябрьски районри патриоткăсем Шиповăпа Тимофеева районри организацисене пырса хăйсене трактор çинче ĕçлеме илме ыйтнă. Октябрьски районри 18 хĕрарăм-трактористка хăйсене ĕçе илме ыйтса заявленисем панă. Сĕнтĕрвăрри районĕнче трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă 5 хĕрарăм фронта кайнисем вырăнне тăрса, трактор рульне хăйсен аллине илнĕ.

Хĕрарăмсем производствăра стахановла ĕçлеме сăмах параççĕ (тир-сăран заводĕнче ĕçлекен Орлова, Ленин ячĕпе тăракан артельтен Дмитриева т. ыт.). Фронта кайнисем вырăнне ĕçе илме ыйтса килхуçи хĕрарăмсем заявленисем параççĕ. Панова юлташăн икĕ ывăлĕ те Хĕрлĕ Çарта, вăл производствăра ĕçлеме кăмăл туни çинчен пĕлтернĕ.

Амăшĕсем çара каякан ывăлĕсене фашистла çĕлен-калтасене хирĕç паттăрăн çапăçса, вĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкма наказ параççĕ. Улатăр станцинчи кондукторски резерв работници Перепелкина юлташ çапла калать: «Манăн виçĕ ывăл, вĕсем тăван çĕршыва сыхлама каяççĕ. Çакăншăн эпĕ хĕпĕртетĕп. Эпĕ вĕсене амăшĕ ячĕпе наказ паратăп: тăван çĕршыв умĕнче хăвăрăн тивĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçа кĕртĕр».

Хĕрарăмсем курсенче вĕренме каяççĕ. Хальхи вăхăтра медицина сестрисен курсĕнче, санитарнăй дружинăсен курсĕнче çĕршер çын вĕренеççĕ. 1941 çулта вăл курссенчен 76 çын вĕренсе тухнă. Июнĕн 22-мĕш хыççăн санитарнăй дружинăсене çĕнĕрен организацилеççĕ. Çапла, сăмахран, спиртзаводра, кооптехникумра т. ыт. предприятисемпе учрежденисенче те çавăн пек курссем организацилеççĕ.

Çамрăк хĕрарăмсемпе хĕрачасем! Эсир хăюллă та пысăк ĕçе тухса каятăр. Сирĕн умра пысăк йывăрлăхсем тăраççĕ, анчах йывăрлăхсенчен хăрама юрамасть.

Сире, фронта каякан хăюллă хĕрарăмсене, Чăваш республикинчи мĕнпур хĕрарăмсем хăюллă та паттăр тата шикĕсĕр пулма чĕнеççĕ.

Çапăçусене кĕме хатĕр пулăр. Кирлĕ пулсан, алла хĕçпăшал тытса тăшмана хирĕç тухăр. Тăшман çине пенĕ чух сирĕн алăрсем ан чĕтреччĕр.

Эпир вара, тыла юлакансем, тыла çирĕплетме, дисциплинăллă пулма, хамăра хамăр шеллемесĕр ĕçлесе, фронта пулăшма пулатпăр.

Чăваш республикинчи мĕнпур хĕрарăмсене РОКК организацилекен курссенче санитари ĕçне вĕренме чĕнетпĕр, санитари ĕçне пĕлни пире тылра та кирлĕ. Санитари ĕçне пĕлнипе эпир фронтра та усă курăпăр.

Производствăра ĕçлекен хĕрарăмсем, стахановла ĕçĕн тĕслĕхĕсене кăтартăр!

Килхуçи хĕрарăмĕсем, колхозницăсем, производствăра упăшкусем, тăванăрсем, асусем вырăнне тăма хатĕрленĕр!

Фронтра та, тылра та пурте пĕр шухăшлă пулса пĕтĕçсе хамăра шеллемесĕр ĕçлесе, тăшмана çĕмĕрсе тăкар!

Пирĕн мухтавлă большевикла партипа, Совет правительстви, пирĕн ăслă çулпуç Сталин юлташ тавра татах та тачăрах пĕтĕçер!

СССР Верховный Совечĕн депутачĕ—Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

СССР Верховный Совечĕн депутачĕсем: Е. ЦЫГАНОВА. Э. ХАРИТОНОВА. Т. МОИСЕЕВА.

Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи мастер Дмитриев юлташ Германи фашизмне хирĕç çапăçма фронта тухса кайнă. Ун вырăнне Наталья Воробьева йышăннă. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Воробьева юлташ производствăра.

К. БАБАЕВ фото-ӳкерчĕкĕ.

Фронта кайнă арçынсем вырăнне хĕрарăмсем тăраççĕ

ЭЛĔК. МТС директорĕн кабинетне хĕрарăмсем кĕрсе тăраççĕ.

— Ну, юлташсем, мĕн ыйтмалли пур сирĕн? — сăмах хушать вĕсене МТС директорĕ.

— Мĕн ыйтасси, кĕрсе пĕлес терĕмĕр. Халĕ трактористсенчен хăшĕсем фронта каяççĕ, вĕсем вырăнне сире çынсем кирлĕ пуласçĕ пулĕ тетпĕр. Çавăнпа кунта кĕрсе, вăл ыйтупа каласа пăхас килчĕ.

— Камсем пулатăр-ха эсир?

— Шарыпкăсем, Христина Николаева. Хĕлле кунта трактористсен курсĕнче вĕрентĕм, ку вăхăтчен килтех пурăнмалла пулчĕ.

Христина Николаева Килтĕшри (Советски р.) тракторнăй бригадăна кайма приказ илет. Ăна МТС директорĕ бригадăна çити лашапа леçтерет. Ку бригадăран бригадир помощникĕ Андрей Михайлов фронта тухса кайнă. Христина ун вырăнĕнче ĕçлеме пуçлать.

Домна Максимова Элĕкри ветлечебницăра техничкăра ĕçленĕ чухне производствăран уйăлмасăрах трактористсен курсĕнче вĕреннĕ, унăн ашшĕ те, Иван Максимов, тракторист. Çураки вăхăтĕнче Домна ашшĕпе пĕрле трактор çинче ĕçлесе практикăлла хăнăху илнĕ. Юлашки кунсенче вăл хăй тĕллĕнех тракторпа ĕçлеме вĕренсе çитрĕ. Домна çапла калать:

— Арçын трактористсем ылханлă Гитлерпа çапăçма вăрçа каяççĕ. Çапах та эпир, хĕрарăмсем, тракторсене ахаль лартмăпăр, МТС планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртĕпĕр. Çакă вăл фашистсене тивĕçлĕ отпор пани пулĕ.

Надежда Ксенофонтова та (Хитекушкĕн ялĕнчен) иртнĕ хĕлле трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă. Вăл Элекенушкĕнчи тракторнăй бригадăра, фронта кайнă Захар Ефимов тракторист вырăнĕнче, ĕçлеме тытăнчĕ.

Çапла фронта кайнă арçынсем вырăнне хĕрарăм-трактористкăсем тракторсен рульне хăйсен аллине илчĕç.

МТС çитес кунсенче хĕрарăмсенчен комбайнерккăсем, машиноведсем хатĕрлеме курс организацилет.

И. МОСЕЕВ.

Хĕрарăм колхозра—пысăк вăй

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Районри ĕççыннисем халĕ пирĕн чечекленсе пыракан çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăннă гитлерла бандăна, юн ĕçекен фашистсене, ăтемлĕхĕн культурине, цивилизацине пĕтересситĕн çунакан çĕленкалтасене çапса аркатас шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ. Усал тăшман пирĕн çĕршыв çине тапăнни ĕççыннисен хастарлăхне, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес активлăха пĕрре те вăйсăрлатмасть. Йăлтах урăхла, халĕ кашни рабочи, кашни колхозник тăван çĕршывăн обороninе тĕреклетессишĕн, фашизма хирĕç кĕрешме фронта пулăшассишĕн питĕ пысăк хаваслăхпа ĕçлет.

Колхозсем тата колхозниксем Германи фашизмне çапса аркатма Совет государствине конкретлă ĕçсемпе пулăшаççĕ. Юлашки 5 кун хушшинче районри колхозсемпе колхозниксем государствăна çĕршер центнер аш-какай леçсе пачĕç. «Красный Остров», Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем 1941 çулта государствăна аш-какай памалли плана 100 проценчĕпех тултарчĕç.

«Красный маяк», «Самолет» ВКП(б) тата Энгельс ячĕпе тăракан колхозсем те государствăна 1941 çулта аш-какай памалли плана 100 проценчĕпех тултарасси патне çитрĕç.

Колхозсем уборкăна питĕ тăрăшса хатĕрленеççĕ. Кашни колхозрах ялхуçалăх машинисене, урапасене юсаççĕ, михĕсем, шăналăксем хатĕрлеççĕ. Хĕрарăм колхозра пысăк вăй пулнине колхозниксем ĕçре кăтартса параççĕ. Мобилизаци йĕркипе тата хăйсен ирĕкĕпе арçынсем фронта тухса кайнă колхозсенче те ĕç нимĕн чухлĕ те вăйсăрланмасть. Колхозниксемпе колхозницăсем колхоз производствинче большевикла хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Кунсăр пуçне тата вăрман касса хатĕрлеме 160 çын тухса кайрĕç.

Ĕççыннисем пĕртен пĕр шухăшпа — фашизма хăвăртрах çапса аркатас шухăшпа хăйсен участокĕсенче дисциплинăллă пулса ĕçлеççĕ.

М. КУЗЬМИН.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Трактористкăсем ĕçе тавăрăнчĕç

СĔНТĔР. Тракторист пулса ĕçленĕ хăшпĕр юлташсем Хĕрлĕ Çар ретне тухса кайрĕç. Вĕсем боевой машинăсем çине ларса, тăшмана хирĕç паттăрăн кĕрешме пулчĕç.

Машинно-тракторнăй станцине кашни кунах хĕрарăмсем килсе, ĕçе илме ыйтса заявленисем параççĕ. Евдокия Спиридонова, Марфа Пузырева, О. Андреева пĕр-ик çул каярах трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă. Çак специальноçпа ĕçлеме пăрахнăччĕ вĕсем. Халĕ каялла ĕçе тавăрăнчĕç. Юлашки кунсенче 10 хĕрарăма ĕçе илтĕмĕр.

Э. АНДРЕЕВ.
МТС директорĕн заместителĕ.

Хĕрачасем санитари ĕçне вĕренсе алла илеççĕ

ЧКАЛОВ, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). Чкаловри 200 ытла хĕрача кружоксемпе курссенче çарпа санитари ĕçне вĕренеççĕ. РОКК-ăн обласри комитетне вунтшар заявленисем пыраççĕ: хĕрачасем хăйсене медсестрасен курсне илме ыйтаççĕ.

Донгуз станцинче 20 медсестрана вĕрентсе те кăларнă ĕнтĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ ачасен яслисене, консультацисене, больницăсене ĕçлеме каяççĕ, фронта кайнă опытлă, пысăк квалификациллĕ медсестрасем вырăнне тăраççĕ.

Трактористсемпе комбайнерсен çĕнĕ кадрĕсем

СССР Наркомземĕ ялхуçалăх механизацийĕн шкулĕсемпе МТС-сене трактористкăсемпе комбайнеркăсен çĕнĕ кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе кĕске срокла курссем ирттерме хушнă. Пирĕн çĕршывра машинăсемпе лайăх ĕçлеме пĕлекен хĕрарăмсем халĕ те сахал мар. Халĕ ĕнтĕ вĕсен хисепĕ нумай хут ӳсет. Кунсăр пуçне, курссенче вĕренме призыва лекмен арçынсене йышăнаççĕ. Çĕнĕ кадрсене тырпул пухса кĕртес ĕçе хутшăнса ĕçлеме ĕлкĕртмелле шутпа хатĕрлеççĕ.

Июнĕн 25-мĕш. (ТАСС).

Хăватлă патриотизм, хĕрӳллĕ ĕç

СВЕРДЛОВСК. 8-мĕшпе 10-мĕш классенче вĕренекен 20 хĕрача Воровский ячĕпе тăракан завода пынă, хăйсене станоксем умне тăратма ыйтнă. Хĕрачасем кирлĕ профессине хăвăрт вĕренсе алла илме сăмах панă. Цехсенче халиччен килхуçи хĕрарăмĕ пулнă çынсене курма пулать. Вĕсем станочниксен, слесарьсен, электромонтерсен профессийĕсене хăвăрт вĕренсе алла илеççĕ.

(ТАСС).

БОЕВОЙ ЭПИЗОДСЕМ

Çамрăк летчик лейтенант Яловойăн çапăçура сложнăй задачăна пурнăçа кĕртмелле пулнă. Икĕ «Мессершмитт» унăн пулеметне стройран кăларнă.

— Эпĕ çапăçуран тухсан, — тесе шухăшланă Яловой юлташ, — тăшмансем манăн юлташсем çине тапăнма каяççĕ.

Ăна вĕçеври мастерлăх пулăшнă. Вăл высший пилотаж фигурисене пĕр фигура хыççăн теприне тума тытăннă, противник те, хăйне асăрханса тыткаласа, ун хыççăн вĕçсе пынă.

Çапăçура Яловоя йывăр киснине старший политрук Анохин асăрханă, вăл тин кăна-ха фашистсен пĕр самолетне хирĕç çапăçăва вĕçленĕ пулнă. Анохин çиçĕм пек хăвăрт вĕçсе тăшманăн пĕр машини çине тапăннă, ăна пулясемпе шăтарсах пĕтернĕ. Иккĕмĕш «Мессершмитт» васкасах тарнă.

* * *

Тул çутăлас умĕн капитан Михайлов задани илнĕ: юханшыв урлă каçмалли çĕре тăшман çарĕсем пухăнса тăнă, çавсем çине бомбăсем пăрахмалла тата кĕпере çĕмĕрсе тăкмалла. Хăвăрт вĕçекем тăхăр бомбардировщик кирлĕ çере вĕçсе кайнă. «Мессершмиттсем» çула пӳлме тăнă. Михайлов юлташ: çăпăçăва хатĕр пулăр, тесе сигнал панă. Тăшман атакисем ăнăçсăр пулнă. Капитан Михайлов, хăйĕн бомбардировщикĕ çинче вĕçсе, икĕ истребитель тăпăнăвне сирсе пăрахнă. Сталинла соколсем хăюллăн та паттăрăн çапăçнă. Тăшман пăрахса тарнă.

Юханшыв леш енче фашистсен танкĕсемпе пехоти, кĕпер патне пухăнса тăнăскерсем, йĕркерен тухсах тĕркĕшме тытăннă. Çапăçу кун пек вĕçленнессине вĕсем кĕтмен. Совет самолечĕсем çинчен каялла бомбăсем вĕçсе анă, бомбăсем вăйлăн сиксе кайнипе сывлăш кисреннĕ. Кĕпер ишĕлсе шыçине ӳкнĕ. Танксем тăнă вырăнта хура тĕтĕм йăсăрланса пĕлĕтелле çĕкленсе кайнă.

Боевой заданине чаплăн пурнăçкĕртнĕ. Совет самолечĕсем чипере хăйсен базине тавăрăннă.

Действующи арми, июнĕн 26-мĕш.
(ТАСС).

Сталинла соколсен паттăрлăхĕ

Ирхине 4 сехет те 10 минутăра кăнтăр енчи мирлĕ хула çине фашистла разведчик-бомбардировщик вĕçсе пынă, Н-ски чăсĕн аэродромĕ еннелле çул тытнă. Боевой тревога парсанах, командир летно-технически состава пухса, çапла каланă:

— Пирĕн валли фашистла çăхансен ирсĕр тапăнăвне пуринчен малтан сирсе ярас телей килсе тухрĕ. Паян пирĕнтен нумайĕшĕн пирĕн сталинла авиацин боевой хăватне сывлăшри çапăçура кăтартса парас пулать. Приказ паратăп: тăшман разведчикĕсене совет территорийĕ çинчен кăларса ямалла мар. Лейтенант Ермак, манпа пĕрле!

Стройран тĕреклĕ летчик-истребитель Ермак тухрĕ. Хăй çине пысăк шанчăк хунăшăн унăн куçĕсем хаваслăн тав туса çуталасçĕ.

— Пурнăçа кĕртме ирĕк парăр?—ыйтрĕ вăл командиртан.

Командир унăн аллине хытă чăмăртать, вара комсомолец Ермак—хăйĕн истребителĕ патне чупать. Çапăçу çиçĕм çиçсе илнĕ пек хăвăрт пулса иртнĕ. Ермак фашистла çăхана хирĕç тӳрех вĕçсе çĕкленет. Фашист ăна куратъ те айккинелле пăрăнса каять. Хăюллă çамрăк лейтенант маневр тăвать те тăшман самолечĕн хӳри тĕлне вĕçсе хăпарать, пулеметран пеме тытăнать. Бомбардировщик сулланса каять те çунма тытăнать, çĕре персе анать.

Çак вăхăтра аэродром патнелле тăшманăн вунă бомбардировщикĕ вĕçсе пыраççĕ, вĕсене «Мессершмитт» йышши истребительсем хӳтлесе пыраççĕ.

Сывлăша истребительсен группи вĕçсе çĕкленет. Çапăçу тĕлĕнмелле вăйлă та хаяр пулнă. Фашистсен бомбардировщикĕсем епле пулсан та аэродром патне çĕмĕрсе кĕме, ăна аркатса тăкма тăрăшаççĕ. Анчах та сталинла паттăр соколсем хĕрӳллĕ атакăсем тăваççĕ, тăшманăн боевой стройне арпаштарса яраççĕ.

Социализмлă тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче пиçĕхнĕ летчик-коммунист Мокляк сывлăшри çапăçăва пуçласа янă. Вăл хăйĕн машинине кирлĕ пек çавăрттарса пынă та, противник самолечĕ çине пулеметран персе илнĕ. Куç умĕнче фашистла бомбардировщикăн уйăрса илмелли паллисем вĕлтĕртетсе илнĕ. Халĕ ĕнтĕ тепĕр машини çине тапăнма май пулнă.

Совет патриоткисем станоксем умне тăраççĕ

ГОРЬКИЙ, июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). «Красная Этна» заводри çамрăк рабочисем фронта каяççĕ. Станоксем умне вĕсен амăшĕсем, арăмĕсем, йăмăкĕсем тăраççĕ. Вĕсем кирек мĕнле ĕçе те тума хатĕр—тăван çĕршывăн усăллă пултăр кăна. Механически корпуса 50 çулти килхуçи хĕрарăмĕ Крылова юлташ ĕçлеме кĕнĕ. Унăн виçĕ ывăл. Вĕсенчен пĕри—Владимир—лейтенант. Çар ĕçне вăл хăйне валли ĕмĕрлĕхех професси вырăнне суйласа илнĕ. Тепĕр икĕ ывăлĕ—Николайпа Сергей—çавăн пекех фронта кайнă.

— Мана ĕçукçи кирлĕ мар, — тенĕ Крылова юлташ, — маншăн Совет правительстви тăрăшать. Упăшка вилнĕ хыççăн мана пенси пама пуçларĕç. Анчах та, тăван çĕршĕн çапăçакан вик[illegible]ăн амăшĕ пулса тăрса, эпĕ [illegible]лемесĕр ларма пултараймас[illegible]шур ĕçсыннисемпе пĕрле тă[illegible]несшĕн эпĕ, юратнă тăван çĕршывăн çар хăватне çирĕплетсе пырасшăн.

Горький облаçĕнчи стахановец-трактористсем, Хĕрлĕ Çара тухса кайса, хăйсен машинисене хĕрачасене парса хăварараççĕ. Бутурлински районри Каменищенски МТС-ри Глазков юлташ, хăйĕн тракторне çамрăк тракториста аллине парса, çапла каланă:

—Çак трактор çинче стахановла ĕçле, хамăран çĕршыв ыйтнă пек ĕçле.

Ĕçлеме пуçланă хыççăн пирвайхи кун хушшинче çĕнĕ трактористкăсем суха тумалли нормăна 140 процент тултарнă. МТС-ра пурĕ 16 хĕрача машинăсен рулĕ умне ларнă. Халĕ трактора вĕренмелли татах тепĕр группа организацилеленĕ.

МТС-семпе колхозсенчи трактористкăсем, машиноведсем тата комбайнеркăсем хушшинче тырă пухса кĕртмелли машинăсене хăвăртрах хатĕрлесе çитерессишĕн социализмлă ăмăрту сарăлса кайнă.

Сураж красноармеецăн паттăр ĕçĕ

Н местечко патĕнчи çапăçура Сураж красноармеецĕ çине тăшмансем тăваттăн тапăннă. Ăна тăшмансем парăнма сĕннĕ.

Çавăн пек сĕнĕве хирĕç сĕмсĕр тăшмансем çине граната ывăтнă, ăна красноармеец тĕл персе янă. Иккĕмĕш вĕлернĕ. Сураж юлташ хăвăрт тата тĕл персе, виççĕмĕшне те вĕлернĕ. Тăваттăмĕш тăшманăн красноармеец хушшинче çапăçу пуçланса кайнă. Çапăçура Сураж юлташăн сулахай аллине йывăр амантнă. Анчах вăл хăйне парăннă тесе шутламан, хăвăрттăн маневр тунă та тăшмана тĕп туса хунă. Часах хамăраннисем пырса çитнĕ. Сураж юлташа малтанхи пулăшу панă, вара ăна госпитале илсе кайнă.

СЕМЯЧКИН.
Санитари инструкторĕ.
Действующи арми. (ТАСС).

Мĕлйун-мĕлйунĕпе тухар çапăçăва!

Вăл этем мар,
Ун ăшĕнче çĕлен сăнни,
Шăрпланнă юн çĕрет
Ун чĕринче.
Чĕр шухăш мар,
Ун пуçĕнче виле шăрши,
Виле шăрши
йӳçет кăкăрĕнче.
Çут тĕнчери
Пур пек тĕрĕслĕхе,
чыса, юратăва
Таптасшăн пулчĕ вăл.
Пирĕн çине,
Пирĕн çĕршыв çине
Ярасшăн пулчĕ мĕн
Усал тăвăл.
Ниепле тăшман
çĕнтереймен пире,
Çĕнтерес çук
Пирĕн халăха тăшман!

Паттăр çĕршыв
Нихçан ая пулман,
Тăшман килсен
Нихçан та парăнман.
Парăнас çук,
Çапса аркатĕ вăл
Çич-сакăр питлĕ
Сăхă Гитлера!
Фашизмăн
Йăхне-тĕпне хĕрӳ вутпа
Йăлт çунтарса
Вăл тăвĕ кĕл-тăпра!
Совет çынни!
Санра чăн тĕрĕслĕх,
Мĕлйун-мĕлйунĕпе
Тухар çапăçăва!
Эпир пĕлетпĕр,
Ку çапăçу ĕмĕрлĕхех
Тăшманшăн пулĕ
Тупăк та çăва!

В. АЛАГЕР.

ГЕРМАНИ ФАШИЗМЁН ПУСМĂРЁНЧЕ АСАПЛАНАКАН ХАЛĂХСЕМ

„Генерал-губернаторство“ территорийёнче

1939 çулти кĕркунне Германири фашистсем Польша государстви пулнă территорин чылай пысăк пайне тытса илсе, оккупацленĕ облаççенче чи тискер террорпа правасăрлăх режимĕ, экономикăпа наци тĕлĕшĕнчен халичен нихăçан илтмен пусмăрăн режимĕ туса хучĕç.

Фашистсем хăйсем тытса илнĕ облаçсене икĕ пая уйăрнă. Пĕр пайне (Верхняя Силезия, Данциг, Познань тата Лодзь) тӳррĕмĕнех гитлерла империн составне кĕртнĕ. Тепĕр пайне (Варшава, Люблин, Ченстохов, Кельцы тата ыт. те) уйăрса, «Генерал-Губернаторство» текенскерне туса хунă, унăн пуçлăхĕ пулма Гитлер хăйĕн ыттисенчен тĕрине—Франк текенскерне уйăрса лартнă. Çав фашистла палач-сыпвăлĕрен 12—14 миллион çын пурăнакан çĕршывра пурне те хăйне пăхăнтарса тăракан диктатор пулса тăрать.

Туртса илнĕ облаççем тĕлĕшпе оккупантсем хăйсен вăрă-хурахла планĕсене пытармаççĕ. Вĕсем: çав облаççем Германи империйĕн колонийĕпе аграрлă пайĕ пулса тăмалла, теççĕ. Фашистсем хăйсен планĕсене мĕнпур хаярлăхпа тата тискерлĕхпе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Вĕсем бомбăсем пăрахса çĕмĕрсе арватнă хыççăн юлнă мĕнпур пек хаклă япалаçене çаратаççĕ. Германие станоксем, машинăсем тата ытти оборудованисене нумай турттарса кайнă. «Генерал-Губернаторство» территорийĕнче предприятисем тăватă пайĕнчен виçĕ пайĕ, топливăпа чĕртавар çук пирки, ĕçлемесĕр тăраççĕ. Тата Германия кунтан продовольствин мĕнпур запасĕсене те пуçтарса илсе каять. Çавна пула «губернаторствăри» хуласенче халăх чăннипех выçă аптăрать. Халăх çăкăр, çĕрулми тата куллен кирлĕ ытти çимĕçсем çуккипе выçăха, аптăраса пурăнать. Нимĕç власĕсем, халăх хуласенчен ялхуçалăхлă районсене кайтăр тесе, выçлăха юриех вăйлатаççĕ.

Мĕнпур тĕрлĕ продуктсене тата тумтирсене те карточкăсем тăрăх кăна памалла тунă. Поляксемпе еврейсене паек нимĕççенчен чылай сахалрах параççĕ. Булочнăйсенче хутăштарса пĕçермен çăкăра нимĕççене кăна параççĕ.

Хуласенче час-часах çакăн пек картина курма пулать: гестапо (нимĕç охранки) агенчĕсем кварталĕ-кварталĕпе кĕтмен çĕртен çавăрса илеççĕ, çуран çынсене тытса, ĕçлеме Германие е «губернаторствăри» ĕç лагерĕсене хăваласа каяççĕ. Фашистсем çакна: ĕç вăйне «вербовка» тăрăх пухни, теççĕ.

Ĕç лагерĕсем мĕнлескерсем-ха вĕсем? Çавăн пек майпа хăваласа пынă поляксене лагерьте сăнчăрланипех ĕçлеттереççĕ. Ĕç кунĕ ирхине 6 сехетре пуçланать. Вăхăта «савăнăçлăн» ирттермеллисене те тăваççĕ. Надзирательсенчен пĕри «чупса вылямалли» вăйă шухăшласа кăларнă. Вăл çынсене центнер çурă таякан груз çĕклеттерсе чуптарнă. Кам кая юлнă, ăна розгăсемпе хĕненĕ. Çавăн пек тискеррĕн хĕненине чăтайманнипе 15 çын вилнĕ.

Иртнĕ вăхăтра Польшăн пулнă, унтан Германи составне—«губернаторствăна» кĕртнĕ облаççенчен поляксемпе еврейсене пĕрре çурă миллион çынна урăх çĕре куçарнă. Куçарнă чухне вĕсен пурлăхĕсене йăлтах турттарса илнĕ. Çавăн пек урăх çĕре куçарассине варварла майсемпе туса ирттерни çинчен Швеции пĕр хаçат тĕплĕн çырнă. Хаçат çапла çырнă:

«Хăйсен килĕсенчен хăваласа кăларса янă çынсем питĕрсе илнĕ товарнăй вагонсенче кунĕ-кунĕпе, çаврăнăпех лараççĕ, вагонсенче халăх çавтери нумайийпе алăсемпе урасене хускатма та вырăн çук, мĕншĕн тесен тăвăр... Нумайăшĕ выçăпа вилеççĕ... Эвакуаци тунă чухне кăштах та пулни хирĕç тăнисене передвижной висепицăсем çине çакса вĕлернĕ те, кайран, халăха хăратаç шутпа, вĕсен виллисене хула тăрăх кăтартса çӳренĕ».

Çынсене массăллăн арестлени, вĕсене вăтам ĕмĕрти тискер йăласем тăрăх асаплантарни, перре тата çакса вĕлерни— çакăн пек ĕнтĕ гитлерла варварсен меточĕсем.

Нимĕç салтакĕсем пĕр ялта çĕрле хĕрарăмсене, ачасене тата стариксене, пуçĕ 500 çынна, илсе тухса, вĕсене çавăнтах перре вĕлернĕ. Перре вĕлерницсем вăрçă вăхăтĕнче тытăна лекнĕ çар çынницсен — поляксен çемьисенчи çынсем пулнă, фашистсем çав çар çынницсене—поляксене, Германи влаçĕсем умĕнче «айăпа кĕнĕ» тесе, малтанах пĕрсе вĕлернĕ пулнă. Оккупантсем çакăн пек «йĕркe» туса хунă: хĕрсем нимĕç салтакĕсемпе калаçнине сисеттĕр, вĕсене публичнăй çуртсене ăсатаççĕ.

Кăçалхи январĕн 10-мĕшĕнче тата февралĕн 4-мĕшĕнче — икĕ кун хушшинчех — Германи полицийĕ Варшавăра, Радомра, Люблинра, Кельцы тата ытти хуласенче 10 пин çынна тĕрмесене хупнă тата концентрацилле лагерьсене ăсатнă. Оккупаци тунă вăхăт хушшинче фашистсем поляксене 70 пин çынна асаплантарса вĕлернĕ.

Кунта «расăлла» тискер теори алхасмаллипех алхасать. Нимĕççем поляксене низший раса, теççĕ. Лодзь хулин пуçлăхĕ нимĕç Юдельхер халăх куçĕ умĕнчех: поляксем—чурасем, вĕсен шăпи—нимĕççемшĕн ĕçлесси, тесе пĕлтернĕ.

Торуда хулинчи халăх Германи власĕсенчен поляксен шкулĕсене уçма ыйтнă. Вĕсем ыйтнине хирĕç çакăн пек ответ панă:

— Çĕрулми кăларас ĕçе, урамсене шăлса тасатас ĕçе вĕренмесĕр те тума пулать, çак асăннă ĕçсем малашне поляксен тĕп ĕçĕсем пулса тăмалла, тенĕ.

«Губернаторствăра» административлă пысăк вырăнсенче пуринче те нимĕçсем лараççĕ. Каçхине 8 сехет иртсен поляксен урамсенче çӳреме право çук. Вĕсем магазинсене пырса мĕн те пулин илмешкĕн малтанах кăтартса хунă сехетсенче кăна шултараççĕ. Хăшпĕр хуласенче поляксене трамвайпа усă курма та ирĕк памаççĕ. Нумай гостиницăсемпе ресторансен алăкĕсем çине: «нимĕççене кăна кĕме юрать» тесе çырса çапнă.

Поляксен нацилле культурине, вĕсен чĕлхипе искусствине калама çук хыттăн хĕсеççĕ. Урамсене, площадьсемпе хуласене полякла ят панă пулнă пулсан, ун вырăнне нимĕçле ятсем параççĕ. Поляксен аслă тата вăтам шкулĕсене хупнă. Вĕсен вырăнне нимĕç шкулĕсене уçаççĕ, анчах та халăх çав шкулсене бойкот тăвать. Варшавăри университет çуртне Германи полицийĕн штабĕ йышăннă.

Еврейсене пачах закон тулашне хăварнă. Хуласенче еврейсене пурне те ятарласа палăртнă кварталсене—гетто текенскерсене—пухнă, çав кварталсем йĕритавра йĕплĕ пралуксем карса тухнă. Варшавăри геттона 500 пин çын хупса лартнă. Лодзь хулинче еврейсен геттине 250 пин çын вырнаçтарнă. Куита пурăнакан еврейсем кăнтăрла иртни 5 сехет хыççăн урамсене тухса çӳреме пултараймаççĕ. Еврей çыннин, 10 çула çитнисенчен пуçласа, хăйĕн тумтирри çинче уйăрăм паллă: сарă е симĕс тĕслĕ пысăк çăлтăр çакса çӳремелле. Геттора пурăнакан çынсем валли ятарласах урăх йышши укçа — йывăçран вак укçа тунă. Еврейсен пĕтĕм халăх çӳрекен трамвайсем çине ларма ирĕк çук. Вĕсен кашнинех ĕç лагерĕнче ним тӳлевсĕр ике çул хушши ĕçлемелле.

Германи фашисчĕсем тăвакан ирсĕр те тискер ĕççем çинчен çырса та пĕтерес çук. Домбровра пĕр синагогăна вут тивертсе çунтарнă, унта кĕлтăвакансем туллиех пулнă. Вутран çăлăнма хăтланакансене персе вĕлернĕ. Калишире фашистсем поляксемпе украинецсене 22 çынна вĕлернĕ, вĕсен ӳчĕсене урапа çине хунă та, темиçе еврея урапана хула тăрăх турттарса çӳреттернĕ.

Петраковский районри Грабек ятлă ялта нимĕç салтакĕ вунă çулхи ачана персе вĕлернĕ, ачи ăна чĕлхе кăларса кăтартнă пулнă. Ача ашшĕ-амăшĕ, пиччĕшĕсем тата аппăшĕсем çакăнăн калама çук хыттăн тарăхнă, анчах вĕсене те персе вĕлернĕ.

Поляк, украинец тата еврей халăхĕсен сарлака массисем фашистла пусмăрçăсене çавтери кураймаççĕ. Хăшпĕр районсенче партизанла отрядсем оккупантсене хирĕç геройла кĕрешеççĕ. Нумаях пулмасть «губернаторствăри» пĕр районра партизансен отрячĕпе нимĕççем хушшинче хĕçпăшалла çапăçу пулса иртнĕ, нимĕççен 44 салтакне тата пĕр генералне вĕлернĕ.

Ĕçсыннисене фашистла пусмăрлăхран ирĕке кăларакан вăйсем ӳссех пыраççĕ. Иртĕнсе кайнă фашистсемпе вĕсен пусмăрне çак вăйсем тĕп туса хурĕç.

С. БОРИСОВ.

Америка корреспонденчĕ Словакири лару-тăру çинчен

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Братиславăран шанă пĕлтерӳре Словакин экономика тĕлĕшĕнчи йывăр положенийĕ çинчен каласа парать. Словакин экономикăллă положенийĕ, тет корреспондент, кунсеренех йывăрланса пырать. Фабрикăсем хупăнаççĕ. Словакири пиравăр тĕртекен пысăк фабрикăна — Мауитнерăн Ружомберти фабрикине февраль уйăхĕнчех хупнă, мĕншĕн тесен ăна ĕçлеме чĕртавар пулман. Чăннипе илсен пиравăр промышленноçĕн ĕçĕ пĕтĕмĕшпех чарăнса ларнă. Тир-сăран промышленноçĕнче те ĕçсем çахнашкалах.

Корреспондент çапла кăтартса парать: Германи оккупанчĕсем Словаки халăхне выçлăхпа чухăнлăх айне персе чикнĕ. (ТАСС).

Нимĕç салтакĕ Альфред Лискоф каласа пани

Эпĕ — Совет Российинче. Çак простой та савăнăçлă шухăша манăн ăспуçăм труках тавçăрса та илеймест. Анчах манăн куçсем,—эпĕ вĕсемпе ман умра уçăлнă çĕнĕ тĕнче çине пăхатăп,—мана каласçĕ: эпĕ çывăрмастăп иккен, çаксене пурне те эпĕ ыйăх тĕлĕшпе мар, чăннипех куратăп.

Гитлер пусмăрĕнчи хăрушă тĕнчерен, çав ылханлă тĕнчерен, тарас шухăш ман ăшăмра тахçанах çитĕнсе пынă. Анчах унтан тухса тарма майлă вăхăт çитессе кĕтмелле пулнă,—акă ĕнтĕ çав майлă минута килсе çитрĕ.

Эпĕ чикĕри Тиляш местечкăра, Совет Союзĕн Сокаль ятлă хулинчен инçетре мар вырăнта, салтак службинче пулнă. Паллă кун — июнĕн 22-мĕш çитес умĕнхи вăхăтрах эпир темскер пысăк ĕç тума хатĕрленсе пынине уçăнах туйма пуçларăмăр. Анчах мĕн тума хатĕрленеççĕ-ха?

— Совет Союзне хирĕç вăрçă пулатьши вара? — ыйтаттăм эпĕ хамран хамах. — Асран тухнă Гитлер çавăн пек авантюра тума тытăнĕ-ши вара?

Эпĕ Совет Российине тарса килме шут турăм. Наступлени тума приказ париччен кĕтрĕм те çĕрле юханшыв урлă ишсе каçрăм. Совет Союзĕ енчи çыранра эпĕ тӳрех пограничниксен аллине лекрĕм. Вĕсем мана туслăн кĕтсе илчĕç. Мана тумтир тата урана тăхăнмалли пачĕç, апат çитерчĕç.

Пире, нимĕç салтакĕсене, темтепĕр каласа хăрататчĕç,—кунта эпĕ мĕн курни пĕртте ун пек мар! Фашистсем кашни салтаках: санăн тыткăна каймалла мар, мĕншĕн тесен сана Совет Российĕнче хăрушă асапсем кĕтеççĕ асаплантарса вĕлереççĕ, тесе минретеççĕ. Çакă вăл — сĕмсĕр суя сăмах, нимĕç салтакне хăратса ӳкерес тесе фашистсем çавăн пек суяççĕ. Совет Российинче тыткăна лекнĕ салтаксем çине лайăх пăхаççĕ, нимĕç фашисчĕсем хăйсем патне тыткăна лекнисем çине кун пек пăхни нихăçан та пулман тата халĕ те çук.

Акă ĕнтĕ ман хыçра эпĕ унтан пăрахса тухнă тăван çĕршыв, вăл фашизм пусмăрĕ айĕнче ахлатса, выçлăх тӳссе, вăрçă хĕн-хурĕсемпе асапланса пурăнать, — пирĕн тăван çĕршыва çак вăрçăна ылханлă Гитлерпа унăн пуçакасаканĕсем тĕртсе кĕртрĕç. Çĕршыври халăхăн шухăш-кăмăлĕсем пусăрăнчăк. Халăх выçă пурăнать, анчах ӳпкелешсе каламасть, ун çинчен кӳршĕри çынна каласа пама никам та хăяймасть, мĕншĕн тесен мирлĕ халăха та тискер террорпа, Гитлер çарта туса хунă пек террорпах, пусараççĕ.

Германи халăхĕ мир пулассине кĕтет. Совет Союзĕ çине фашистсем предателле тапăннă умĕнхи кун та кун пек тапăну пулма пултарассине никам та ĕненме пултарайман. Çак ăссăр авантюрăна Германи халăхĕ мĕнле йышăнса илнине чухлама çăмăл. Çак вăрçа урса кайнă тискер кайăк—Гитлер Германи халăхне вăйпах хутшăнтарнă вăрçа, пирĕн халăх кăмăллама пултараймасть. Совет Союзне хирĕç пыракан çак вăрçăра фашизм хăйĕн вилĕмне тупмалла, вăл вилĕм тупатех.

Германи салтакĕсен те,—эпĕ нумай пулмасть вĕсен ретĕнче пулнă,—шухăш-кăмăлĕсем пусăрăнчăк. Анчах кашниех хăйĕн шухăшĕсене ыттисене каласа пама хăраса тăрать. Салтаксем пĕрне-пĕри шанмалла мар туса хунă. Хăйĕн шухăшĕсене никам та саспа каламасть, вĕсене хăй ăшне тарăна пытарать. Салтак — икке пайланнă çын пулса тăрать: пĕри—çнелтен пăхсассăн курăнаканнийĕ, тепри — кашнин чĕринче мĕн пуррийĕ. Салтак хăйĕн чĕре патĕнчи шухăшĕсене каласа пама хăрать, мĕншĕн тесен ăна гестапо тата вилĕм хăратса тăрать.

Офицер аллинчи патак, персе пăрахас хăрушлăх — çаксем нимĕç салтакне вăрçă вăрçтараççĕ, анчах вăл вăрçасшăн мар, вăл мир пулассине çăвăн пекех кĕтет.

Халĕ ĕнтĕ, эпĕ Совет Российинче чухне, нумай та пулмасть иртнĕ вăхăтра хамăн юлташсем пулнисене манăн çапла калас килет:

— Германи салтакĕсем, рабочисем, хресченсем, арçынсем тата хĕрарăмсем! Мĕн пачĕ-ха сире Гитлер? Мĕн илсе килчĕ сире валли фашизм? Вĕсем сире чĕтресе хăраса пурăнмалли çурнăç, этем тӳсме çук хĕн-хурсемпе асапсем, выçлăх, çуклăх, вилĕм пачĕç. Аçта сирĕн мирлĕ ĕç, сирĕн упăшкасем, тăванусем, ывăлусем? Сирĕнтен мĕнпурринне пĕтĕмпех юнлă Гитлер турттса илчĕ. Çакна эсир тата хăçанччен тӳссе пурăнăр-ха? Эсир тӳссе пурăнакан пысăк асапсем тата хăçанччен пырĕç-ха? Гитлер сире Совет Союзне хирĕç çĕнĕ вăрçа туртса кĕртрĕ. Çак вăрçăра фашизм хăйĕн вилĕмне тупмалла.

Эпĕ кунта, Совет Союзĕнче, фашизма пĕтерсе хума пурте пĕр çын пек çĕкленнĕ нумай миллионлă халăха куратăп.

Германи салтакĕсем! Фашизма хăвăртрах пĕтерсе хума сирĕн пулăшмалла. Штыксене Гитлера хирĕç тата унăн халĕ Германие тытса тăракан ушкăнне хирĕç çавăрăр. Çакна тунипе эсир таса ĕç тăватăр. Вара мир пулĕ, ăна Германи халăхĕ чун-чĕререн кĕтсе тăрать, вара ылханлă фашизм ялан-лăхах тĕп пулĕ!

Альфред ЛИСКОФ.

Кольберк хулинче çуралса ӳснĕ, Вилли Тацикăн сĕтел-пукансем тăвакан фабрикин рабочиĕ.

Фашистла Германия—концентрацилле лагерь

Вăрçă пуçланнă вăхăтра фашистла Германири концентрацилле лагерьсемпе тĕрмесене «шанчăксăррисем» 436.598 çын асапланса пурăннă. Çакă вăл мирлĕ вăхăтра пулнă, тата ăна гестапо хăй нумай пĕчĕклетсе кăтартнă. Хальхи вăхăтра, тесе çырать Америкăри «Уик» журнал, тĕрмере ларакансен хисепĕ нумай хут ӳснĕ.

Ятарласах тунă лагерьсенче çĕршер пин хĕрачасем ĕçлев повинноçĕ текен ĕçре асапланаççĕ. Официальнăй даннăйсенче халанă тăрăх, Германире хĕрарăмсем валли тунă «ĕçлев повинноçĕн» лагерĕсем 2 пин лагерь ытла шутланаççĕ. Çав лагерьсенчи йĕркесем çинчен «Франкфуртер цейтунг» хаçат намăса пĕлмесĕр çырса пĕлтернинчен те тавçăрса илме пулать. Çак хаçат «ĕçлев повинноçне лекнĕ хĕрачасемпе чăрманса тăмалла мар» тесе çырать. Вăй çитермелле мар йывăр ĕç, шуçăм килсен пуçласа сĕм тĕттĕмччен тăсăлакан ĕç, начар çитерсе тăрантарни, фашистла бандитсем мăшкăлласа кулни çамрăксене халран ярать, вăхăтсăр ватăлтарать.

Германия вăл—питех те пысăк концентрацилле лагерь. «Германире гестапо сăнаса тăман пĕр арçын та, пĕр хĕрача та, пĕр çамрăк ача та çук»,—тенĕ нумаях пулмасть Германи халăхĕн палачĕ Гиммлер.

Фашистла правительсем Германи халăхне чăтма çук йывăр пурнăçа персе чикнĕ. Германи рабочийĕн ахаль те пĕчĕк ĕç укçине татах та ытларах пĕчĕклетеççĕ. Америкăри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Германири ĕçсыннисен ĕçукçийĕн çуррине яхăн пайне налогсемпе ытти йышши хырăçсем урлă тытса юлаççĕ. Германире вăрçă вăхăтĕнче тĕрлĕ ятпа нумай ĕçукçи тытса кулнисĕр пуçне, «ятарласа» тунă сборсем пур. Германире пурĕ 24 тĕрлĕ налог шутланать.

Германире хаяр террор сарса янă пулсан та, ĕççыннисен тарăхăвĕ пĕрмаях ӳссе пырать. Хальхи вăхăтра, тесе çырать. «Уик» журнал, Германире пысăк забастовкăсем куллен кунхи ĕç пулса тăраççĕ. Кельн — Мюльхеймри «Карлсверке» ятлă пысăк заводри оборонăй икĕ цехра ĕçлекен рабочисем ĕç укçине чакарнине хирĕç протест туса, забастовка организацилеççĕ. Гамбургри «Блом унд фосс» предприятийĕнчи авиаци цехĕнче тата подводнăй лодкăсен строительствин центрĕнче—Ростокри «Нептун» заводра та çавнашкал забастовкăсем тунă. Австрири «Альпине Монтан вэрке» ятлă металлурги концернĕн завочĕсенче те пĕрмаях забастовкăсем пулса иртеççĕ. Рабочисен фашистла пусмăрçăсене хирĕçле выступленийĕсем тĕрлĕ формăсемпе пулса иртеççĕ.

Хресченсем хушшинче те кăмăлсăрлăх ӳссе пырать. Нумай вырăнсенче, уйрăмăнах Киль районĕнче, тесе çырать «Уик» журнал, хресченсенчен туртса илнĕ тырă сыхланса выртакан складсене (государство склачĕсене) вут тĕртсе çунтара-çунтара яраççĕ.

Июнĕн 26-мĕш. (ТАСС).

Норвегири лару-тăру

(Норвеги писателĕ Курт Сингер çырнă статья)

«Нью-Йорк таймс» хаçат Норвеги писателĕ Курт Сингер çырнă статьяна пичетлесе кăларнă. Сингер çапла çырать: Норвеги халăхĕ оккупантсене хирĕç çине тăрсах кĕрешет. Квислинг режимне хирĕç демонстрацисем тунă çинчен кашни кунах пĕлтереççĕ. Саботаж тăвасси анлăн сарăлнă.

Квислинг тавра пухăннă норвежец-изменниксене урамсенче тыта-тыта хĕнеççĕ.

Иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнче Берлина кайнă вăхăтра, тет Сингер, Квислинг фашистла режима пăхăнман норвежецсене хирĕç террор пуçласси çинчен Гитлерпа калаçса татăлнă. Унтан верховнăй суда салатса янă, ун вырăнне Германи судне туса хунă. Англипе Америкăран паракан радиопередачăсене итленĕшĕн норвежецсене пĕр çултан пуçласа 2 çула çити тĕрмере хупса усрамалла тăваççĕ. Айăплă текен çынсене вĕлермелле тунă.

Цензура хаяр пулнипе, тесе çырать Сингер, тĕрлĕ информацисене вăрттăн сармалли çĕнĕ методсемпе усă кураççĕ. Нумаях пулмасть Германин çар судĕ 27 норвежеца тĕрмере (пуринчен ытларах 5 çула çити) хупса усрамалла тунă, вĕсене Германин оккупацилле çарĕн пурлăхне сиен кӳнĕшĕн тесе айăпланă. (ТАСС).

Румынири фашистла мракобеси

Германи фашизмĕ таптаса тăракан Румынире культурăллă пурнăç йăлтах пĕтсе ларнă. Румынири «Универсуль Литерар» уççăнах пĕлтернĕ тăрăх, Румынире художествăллă тата научнăй литература пичетлесе кăларма чарнă. Издательствăсем пичетлесе кăларма пултаракан пĕртен-пĕр кĕнекесем вĕсем—раса «теорийĕ» çинчен калакан кĕнекесем. Кĕнеке магазинĕсенче çавнашкал «произведенисене» кăна курма пулать. Румынине куçса çӳрекен нимĕç «ученăйĕсем» пырса тулнă, вĕсем «расăна тасатасси çинчен», «нации расăллă пĕрлĕхĕ çинчен» лекцисем вулаççĕ т. ыт. те.

Румынири «Универсул» хаçат çырнă тăрăх, Румынири наукăсен академийĕн ларăвĕнче пĕр темĕнле «доктор» «çынсене ача çуратмалла мар тăвасси—расăна хӳтлемелли биологиллĕ фактор» темăпа лекци тунă. Çак лектор Германи примерĕ çине кăтартса парса, Румынире çынсене ача çуратмалла мар тумалли системăна ĕçе кĕртме сĕннĕ, çакă вăл «румын расизмĕн çĕнĕ эпохин пуçламăшĕ» пулнă пулĕччĕ,- тесе ĕненгерме тăрăшнă.

Франция Германин оккупацилле çарне тытса тăрас ĕçре тăвакан расходсем

ВИШИ, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). Оккупацилле çара тытса тăнипе Франци çулталăк хушшинче 150 миллиард франка яхăн расход пулнă. Çапла ĕнтĕ, Франции кашни çемье çине 12 пин франк чухлĕ расход ӳкет.

ВИШИ, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). Франци банкĕ Германин Франции оккупацилле çарне тытса тăрас ĕç валли правительствăна татах 10 миллиард франк пама килĕшнĕ.

Голландири халăхпа фашистсем хушшинчи тытăçусем

Голландире тухса тăракан хаçат Голландири вырăнти çынсемпе Мусерт отрячĕсем (вырăнти фашистсем) хушшинче тытăçусем пулса иртни çинчен пĕлтерет. Майăн 31-мĕшĕнче Германи салтакĕсен группин велосипечĕсем çинчи шинасене касса çĕмĕрнĕ. Июнĕн 1-мĕшĕнче халăх ушкăнĕ Мусерт организацийĕнче тăракансенчен пĕрин кантăкне ватнă, тепĕр ултă фашистăн алăкĕсене краскăпа вараласа тухнă. Июнĕн 4-мĕшĕнче темиçе фашист çине пăшалсенчен пенĕ. «Ньюве Роттердамше курант» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, пĕр района Муссерт отрячĕсене куçарса пынă чухне çав районри халăх протест демонстрацийĕ тунă. Фашистсем ларса пыракан поезда полици хӳтлесе тăнă пулсан та, фашистсен пĕр начальникне пырĕнчен çĕçĕпе пырса чикнĕ. Ун çине тапăннă çын тарса пытаннă. (ТАСС).

Чехири фашистла террор

Англири «Манчестер гардиан» хаçат хăйĕн дипломатниллĕ обозревателĕ Чехипе Моравăри протекторачĕ çинчен çырнă статьяна пичетлесе кăларнă.

Обозреватель çапла çырать: нимĕçсем Чехине пĕр шеллемесĕр германизацилеççĕ, унтан хăйсен вăрçăри нушисене тивĕçтермелли арсенал туса хураççĕ.

Протекторат территорийĕ çине нимĕçсем пыма чарăнмаççĕ. Чехсен çурчĕсене турта-турта илеççĕ, вĕсене Германирен пыракансене пурăнма параççĕ. Германие кӳршĕри çĕршывсенчен пынă хăшпĕр нимĕççене те протектората ярса вырнаçтараççĕ. Германирен тата вăл оккупациленĕ çĕршывсенчен куçарса пынă нимĕççене вырнаçтарма Эльба районĕнчи 29 ялтан чехсене хăваласа кăлараççĕ.

Темиçе кун каярах Германи протекторĕ фон Нейрат çакна палăртнă: чех чиновникĕсене арестленĕ пирки чех руководителĕсемпе нимĕç руководителĕсем хушшинче хирĕçӳсем пуçланнă. Çак хирĕçӳсем Германин протекторатри пĕтĕм административлă аппаратне аркатса яма пултарнă. Нейратăн çакăнтан урăх нимĕн тумалли те юлман: вăл протекторатра ĕçлеме тепĕр ушкăн нимĕççене чĕнсе илнĕ.

Июнĕн 26-мĕш. (ТАСС).

Мексика ютçĕршыв ĕçĕсен министерствин заявленийĕ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 27-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Мексика ютçĕршыв ĕçĕсен министерстви Германия Совет Союзĕ çине тапăннине сивленĕ. Çапла тапăнни, тенĕ министерство, «тĕнчери этикăна (тӳрĕлĕхе) питех те киревсĕррĕн пăснисенчен пĕри пулса тăрать, çакнашкал япала историре халиччен те пулман».

ХРОНИКА

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ А. А. Смирнов юлташа ССР Союзĕн Иранри Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ пулма уйăрса лартнă.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ М. Е. Филимонов юлташа, ăна урăх ĕçе уйăрса лартнă май, СССР Союзĕн Иранри Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕн обязанноçĕсенчен хăтарнă.

Горисполкомра

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ вăрçă вăхăтĕнче рядовой тата кĕçĕн начальство составĕнчи военнослужащисен çемьисене пособисем памалли тата тӳлемелли йĕрке çинчен кăларнă Указ тăрăх хула Совечĕн исполнительный комитечĕ çак составпа комисси туса йĕркеленĕ:

Комисси председателĕ — Горисполком председателĕн заместителĕ И. П. Петров юлташ.

Комисси членĕсем: хулари çар комиссарĕ Ф. С. Моргунов юлташ, социальнăй обеспечени отделĕн заведующийĕ В. Ф. Ахлаткина юлташ.

Пособисем памалла тăвас ыйтусем тăрăх заявленисемпе документсене социальнăй обеспечени отделĕнче йышăнаççĕ (Карл Маркс урамĕ, 1-мĕш №-лĕ çурт, Горисполком, 1-мĕш этаж, 15-мĕш №-лĕ пӳлĕм).

Пособисем памалла тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси Горсовет исполкомĕнче ĕçлет (II-мĕш этаж, 5-мĕш №-лĕ пӳлĕм).

ГОРИСПОЛКОМ.

Лекцисем ирттермелли темăсем

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ пирĕн халăхăн геройла ĕçĕсем çинчен çакăн пек лекцисем ирттерме сĕнет:

1. Вырăс халăхĕ нимĕç рыцарĕсене хирĕç кĕрешни (1242 çул).
2. Вырăс халăхĕ Польшăпа Швеци интервенчĕсене хирĕç кĕрешни (1607—1613 çулсем).
3. Вырăс çарĕн çичĕ çул хушши пынă вăрçăри героизмĕ (1756—1762 çулсем).
4. Отечественнăй вăрçă (1812 çул).
6. 1918 çулта Украинăра Германи интервенчĕсене çĕмĕрсе тăкни.
7. Сталин тата Царицына хӳтлени.
8. Колчака çĕмĕрсе тăкни.
9. Деникина çĕмĕрсе тăкни.
10. Сталин тата Петрограда хӳтлени.
11. Бело-поляксен интервенцине çĕмĕрсе тăкни.
12. Врангеле çĕмĕрсе тăкни.
13. Граждăн вăрçин легендарлă геройĕ Щорс.
14. Граждăн вăрçин легендарлă геройĕ Чапаев.
15. 1940 çулта белофинсене çĕмĕрсе тăкни.

Ответлă редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

К сведению поступающих на заочное обучение Чувашпединститута.

Начало приемных испытаний на заочное обучение Чувашпединститута переносится на 4 августа 1941 г., установочная сессия—на 9 августа.

ДИРЕКЦИЯ.

О приемных испытаниях

в Чувашскую Оперную студию при Саратовской Государственной консерватории

Управление по делам Искусств при СНК ЧАССР, ДОВОДИТ ДО СВЕДЕНИЯ всех подавших заявления, что приемные испытания в Чувашскую Оперную студию при Саратовской консерватории СОСТОЯТСЯ с 5 по 10 июля с.-г. в гор. Чебоксарах, в здании Музыкального училища.

Управление по делам Искусств при СНК ЧАССР.

В ГОРОДЕ ЦИВИЛЬСКЕ

на базарной площади с 4 по 9 июля 1941 года
ПРОВОДИТСЯ
ПЯТИДНЕВНАЯ ЯРМАРКА

На ярмарке будут в большом ассортименте промышленные и сельскохозяйственные товары.

Ярмарком приглашает колхозы, колхозников, промысловые и кустарные артели, торгующие организации выступить на ярмарке со своими товарами. ЯРМАРКОМ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» тата «Хатĕр пул» журналсен — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 3100

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 293. Ф. б. 53 84 п. л.